Иссев. И
30-83

Иссайӗв Мӗтри



# ПРОЛЕТТАРИ ЛИТТЕРАТТУРИШӖН

*

Хакӗ 25 пус.

Ҫӑваш Кӗнеки Уйрӑмӗ
Шупашкар 1930

ИССАЙЁВ МЁТРИ

# ПРОЛЕТТАРИ ЛИТТЕРАТТУРИШĔН

## КРИТТĔКЛЕ СТАТЙАСЕМ

№ 12256
А.С.С.Р.

Ђăваш Кĕнеки Уйрăмĕ
ШУПАШКАР — 1930

Отпеч. в типографии № 1
Чувашгиза, г. Чебоксары
Заказ № 1265
Чувашлит № 601
Тираж 4000 экземп.

## Пирӗн литтераттурӑри йут шухӑшсем

### (умсӑмах вырӑнне)

Клас тӑшманӗ хӑйе́н шухӑшӗсене пиҕет урлӑ та сарма хӑтланнине тӗл пулатпӑр епӗр. Ун пирки каласассӑн, сӑмах пырса тивекенсем ҕас-ҕасах:

— Есӗр пӗр-пӗрне путарасшӑн кӗрешеттӗр, теҫҫӗ. Апла калани вӑл пирӗн йут шухӑшсене хирӗҫ хытӑрах кӗрешмеллине, вӗсене тымарӗпех ҕакаласа ҫаратмаллине пӗлтерет. Ҫавӑнпа епӗр пиҕетре тѐл пулакан хӑшпӗр вырӑнсем пирки каласшӑн.

— Совет пиҕетне тӑшман шухӑшӗсем йепле кӗме пултарҕҕӑр? Ахаљ ҕакаланмастӑри есӗр,—тейекенсем те пулӗҫ.

Паллах, пирӗн пиҕете тӑшман тӳрех кӗрсе кайаймасҭ. Унӑн тӳрӗ ҫулне пӳлни 13 ҫул пулаҭ ӗнтӗ. Анҕах тӑшмана ҫӗнтерни тӑшмаң пӗтнине пӗлтермест, ҫав тӑшмєн пӗн пур вӑйпа ҫине тӑрса кӗрешет. Пиҕете вӑл натси ыйтӑвӗпе пӳркенме хӑтланса та, искуствӑпа витӗнсе те, ытти майпа та кӗме тӑрӑшаҭ, кӗркелет те.

1928-мӗш ҫулта пӗр ҫыруҫ, ҕӑвашсене куљттурлатас шутпа, ҕӑвашсен „иккӗмӗш йеврей" пулмалла, тени наҕар мар, тесе вӗрентрӗ. Ӑна ун ҕухне тӗплӗ тавӑрса калаканах курӑнмарӗ. Тӗрӗссипе, ун пек вӗрентни пуршуйсен натсионалисӑмӗнҕен тухса пыракан йапала. Вырӑс пуршуаҫийӗ йеврей ӗҫхалӑхне таптаса пынӑ

вăхăтра, пусмăра пытармашкăн йеврейсене (ытти халăхсене те) наҫар халăх вырăнне, улталакан халăх вырăнне хума вĕрентнĕ. Пуршуаҫи ҫĕлхинҫе: йеврей пек тени — улталакан, ҫынна лартакан, таҫта та кĕрсе тухакан тени пулаť. Апла пулсан, „иккĕмĕш йеврей“ пулма сĕнни мĕне пĕлтерет? Пуршуаҫи ăнланăвĕнҫи пек пулмалине марши? Епĕр, ĕҫҫыннисем, йеврей халăхĕ хушшинҫе классем кĕрешнине, йеврей ĕҫхалăхĕ ытти ĕҫхалăхпе сотсиалисăмшăн кĕрешнине пĕлетпĕр. Кунта камăн кам пек пулмалли ҫук. Пĕр ҫемйе. Анҫах пирĕн натсионалиссем ун пек шухăшламаҫҫĕ.

Ун пек ҫынсем, ҫăваш ĕҫхалăхне малта пыракансем патне ҫывхартас вырăнне йепле те пулсан уйрăмлатса, пўлсе тăрасшăн: мĕншĕн пирĕн „ҫăваш кăлентарĕ“ мар, „ҫăвашла кăлентар“? тесе ыйтаť ҫав автăрах.

Унта пĕрле вара пирĕн хăшпĕр калавҫăсемпе сăвăҫсем те ҫăваш „тĕнҫине“ шырама қайаҫҫĕ. „Утăмăн“ 2-мĕш нумĕрĕнҫе Вантер Й. вăл „тĕнҫене“ пупсем, кулаксем пĕрлешсе ҫăваша шкул уҫса панинҫе тупаť; паллă сăвăҫ Хусанкай, ҫăваш „тĕнҫине“ тупаймасăр „выҫăхха ҫăваш“ тесе лаплаттарса ҫырса лартаť; тепри ҫăвашсемпе вырăссен ҫыхланма йурамасť, вырăс хĕрĕсемпе „каҫҫа илме“ йурамасť, тесе вĕрентет (Йурккинăн „Пиҫнĕ тутасем“), тата ытти майлисем те ҫылай. Кам шухăшĕсем вĕсем? Пуршуаҫи: есĕ ҫăваш, хамăр йăхри ҫын, йеврей, тутар т. ыт. ĕҫлекенсем йут ҫын пулаҫҫĕ, вĕсене курайми пул, тесе вĕрентет. Ҫав вĕрентўн ҫеҫкисем мари вĕсем?

Натсионалисăмла шухăшсене ҫăваш хушшинҫе саракансем сахал мар. Вĕсем—ҫăваш кулакĕсемпе непмăнĕсем, вĕсен тусĕсем. Ĕҫлекенпе хресҫен сотсиалисăмшăн ĕҫленĕ вăхăтра вĕсем: ҫăваш халăхĕ пĕтет, пире

(ђăваша) хамăр майлă пыма памаççĕ, ђăваш çĕршывĕ колони пек тăрса йулаť, тесе тĕрлĕ майсем сĕнеççĕ. Ђăваш керойĕсене шыраса тупма хăтланаççĕ, ĕлĕкхи ђăвашăн „ђаплă“ пурнăçне (камшăн ђаплă пулнă?) шыраса „тупса“ кăтартаççĕ. Ђăваш аваллăхне кăтартакан кĕнекесем çинђе нимĕнле кĕрешў те тупаймăн. Унта пылпа сар çу кăна!

Çапла клас тăшманĕ натсионалисăм йалавĕ айĕнђе кĕрешет.

Натсионалисăмла шухăшсемсĕр пуçне, литтературăна нимĕнле пытанман тăшман сассисем те леккелеççĕ.

Нумайах пулмасť, сăвă маçтăрĕ Рсай хăйĕн сăввисене пухса („Çамрăк вăхăт“) кăларђĕ. Ку кĕнекери сăвăсем урлă кулак хăйĕн пурнăçне револђутси ватнăшăн туллашаť, хăйĕн шухăшĕсене никамран пытармасăр йухтараť. Кăпиталисăмăн тымарĕсем пĕтнине курса, Рсай поет:

„Тăван çĕршывăм ман шур пирлĕ,
Тăван çĕршывăн çитсă çук,
Халђхи кунсем пур—хытă тирлĕ,
Халђхи кунсен ăшшийĕ çук,

тесе макăраť. Пуршуаçишĕн, револђутсин тепĕр йенђе тăракансемшĕн „халђхи кунсен ăшшийĕ çук“. Ыттисем макăрса çеç ларăђђĕç. Анђах Рсайăн сăвви малашне пурнăç кайалла çаврăнассине ĕмĕтленме хушаť. „Ĕмĕт“ йатлă сăввинђе:

„Ан йĕр, савни, йĕме вăхăт çитмен,
Тăвăл иртет. Унтан ес ан хăра“

тесе йăпатаť вăл. Çапах пурнăçăн „ăшшийĕ çук“, тăвăл та иртменха, çавăнпа:

„Пулас ман хамăн та çил,
Шăхрас пур шăтăкран.

Çeçен хир пултăр манăн кил,
Çырма—апат хурађ...
(„Парне“)

Ђăнахах та уйра çеç шăхăрмалла, анђах ку асарписерсем Ђăваш Кĕнеки Уйрăмĕнђен те шăхăрса тухаççĕ. Рсай кĕнекине ытти йапаларан хакла хунă, çавăнпа ăна... йўнетсе сутаççĕ.

Çав Рсайах „Сунталра“ „Пушар“ йатлă калавĕнђе ђăваш çырулăхĕнђе халиђђен пулман вăйлă порнокрафиллĕ йапала çапрĕ. Ăна кура хăшпĕр криттĕксем: ку—ђăвашсен ђи ђаплă происветенийĕ! терĕç. Унăн итеолокине астăваттăр пулĕ? Пĕр ђухăн çын револютсишĕн çапăçма тăнă çĕртен револютсине хирĕç пыракан пуп хĕрне çăласшăн вилет. Вăл хушăра Рсайа çил те „ашшин ывăлин“... тесе кашланă пек туйăнаť.

Ку çил ăçтан вĕрни паллах. Кивĕ тĕнђерен вĕрет, хăйпе пĕрле тăшман сассине илсе килет, пирĕн шăтăксенђен те вĕрме хăтланаť.

Револютси урапи хушшине хĕсĕнсе йулнă çынсем: револютсирен еккономи решимĕпе сайомсем кăна йулђĕç, теççĕ. Вĕсен сăмахне литтераттурăра илемлетекенсем те тупăнаççĕ.

„Сунталăн“ 3-мĕш №-рĕнђе (1929 ç.) çапăннă Паймен сăввисем çинђен пĕр вăхăтра ђылай каласрĕç. Анђах пиђетре унăннипе ун пеккисен ăшђиккине тавăрса кăтартас вырăнне, ун пек йĕркесĕрсем пулма пултарнине çеç кăтартса пађĕç. Çавăн пек йапаласем тăшмана хĕснĕ май, вăл хăй те хирĕç хĕсме хăтланнинђен килнине кăтартса паракансем пулмарĕç те.

Пайменăн тĕнђене хупăрласа илнĕ хура пĕлĕђĕ çинђен, пурнăçа сăра курки витĕр курни çинђен пирĕн криттĕксем шарламаççĕ. Револютсин малтанхи тапхăрĕ

çинђен аванах çырнисем те тĕл пулаççĕ, çав вăхăтрах халђхи пурнăçăн „ăшшине" сисменнисем те пайтах. Ђăваш çĕршывĕнђе те тем пек йăвăрлăхсем урлă сотсиалисăм пайĕсем ÿсеççĕ, вĕсен тавра классен кĕрешĕвĕ хĕрсе пырать, вĕсем çинђен çыру ăстисем сахал шарлаççĕ. Криттĕксем мĕнле формăпа çырнине сăнанă хушăра пурнăç йухăмĕпе çыхăнассине манса хăварма хăтланаççĕ.

Искуствă—пурнăçа пĕлмелли, ăна опрăспа кăтартмалли май, литтераттурă—вăл тĕлĕшпе ђи малта тăрать. Анђах пирĕн çыруççем пурнăç çине пурĕ уçă куçпа пăхаймаççĕ. Вĕсене пурнăç илемсĕр, ниме йурăхсăр пек курăнать. Пире йыншасем кирлĕ мар. Вĕсемпе кивĕ тĕнђе хăтлантăр. Епĕр сотсиалисăм тăватпăр, пурнăçăн кашни пайнех сотсиалисăм кĕртетпĕр. Унпа пĕрле пиђетпе литтераттурă та пире вăй парса тăракан пулмалла, унти тăшман шухăшĕсене таптаса пымалла.

* * *

Ку кĕнекере пирĕн литтераттурăра палăракан йут шухăшсене хирĕç çырнă Иссайĕв Мĕтрин хăшпĕр статйисем çапăнаççĕ.

Иссайĕв Мĕтри револђутсионер-писсаттĕл. Унăн „Рапфак хĕрĕ", „Çулăмри йал", тата ытти просветенийĕсем револђутси кăкăрĕпе сывласа, çĕнтерсе пыракан сотсиалисăмла пурнăça, çĕнелекен йала, ĕçхалăх кĕрешĕвĕн çитĕнĕвĕсемпе йăвăрлăхĕсене кăтартаççĕ. Анђах вăл писсаттĕл çеç пулман. Вăл вăйлă криттĕк те пулнă. Ђăваш литтераттуринђе палăркалакан натсионалисăмла, кулакла шухăшсене хирĕç хĕрÿллĕ статйасем, криттĕкла ођђĕрксем çырать вăл. Рсайсен, Вантерсен кулакла йурри-сене, Хусанкайсен çĕннине тупаймасăр макăрнине хирĕç Иссайĕв Мĕтри ђи малтан тухса, вĕсен йăнăшĕсене,

сийенлĕ шухăшĕсене намăслантарат̆, вĕсене хирĕç хастарлă кĕрешĕве, çĕнĕ пурнăçшăн хăпартланма ҫĕнекен çĕнĕрен çĕнĕ калавсем, статйасем çырат̆, пухусенҫе тухса калат̆. Фетăрăв таврашсем литтературăна политтĕкран, çĕнĕ пурнăç тăвасшăн пыракан кĕрешӳрен уйăрасшăн тапаланнине хирĕç кĕрешет.

„Есĕ тăвасшăн кĕрешнĕ ĕçе санăн кĕрешӳри йулташусем туса çитерĕç. Ҫăваш пролеттари литтературĕ пысăк утăмсемпе малалла кайĕ. Унăн йухăмне çĕнĕрен-çĕнĕ вăйсем хутшăнĕç!“ терĕ „Канаш“ хаçат Иссайĕв вилнине пĕлсен. Епĕр те çавнах калатпăр. Кĕрешӳ вăйлăлансах пырат̆, вăл кĕрешӳре пролеттари литтературĕ вăйлăланса, тĕрекленсе пырĕ, пĕтĕм йăнăшсене, сийенлĕ шухăшсене пĕр шеллемесĕр таптаса малалла утĕ.

**Алентей К.**

## Маркçисăм-ленинисăмпа литтературă.

„Халăха вĕрентес ĕç" шурналăн 8-мĕш номĕрĕнђе (çенťапĕр, 1929 ç.) Фетăрăвăн „Илемлĕ литтераттурă, ун меттотолокийĕ, ăна технĕккăмсенђе вĕрентесси" йатлă статйи çапăнса тухнă. Çак статйара пире пуринђен ытла ун авттăрĕ ним сăлтавсăрах хурах çухăрни тĕлĕнтерет. Вăл статйан авттăрĕ—литтераттурă ыйтăвĕсем тăрăх епĕ анђах тĕрĕс çул çинђе тăратăп, пĕтĕм ђăваш писсаттĕлĕсем, Ђăваш Пролеттари Писсаттĕлĕсен Ассотсиатсийĕ йăнăш çулпа пыраť, тесе ĕнентерме тапаланаť. Анђах вăл хирĕçлекен шухăшсем Ђ.П.П. Ассотсиатси шухăшĕсем мар, вĕсем пĕтĕмпех çав статйа авттăрĕн фантаçийĕ пулса тăраççĕ. Çавăнпа епĕр çак статйара Ђăваш Пролеттари Писсаттĕлĕсен Ассотсиатсине айккине хăварса, Фетăрăв шухăшĕсем пирки кăна калаçасшăн.

### Илемлĕ просвештенипе хаçатри статйа ăраснаăхĕ.

„Литтераттурă—классен кĕрешĕвĕнђи орути пулсан, партти, совет, хаçат, фелйеттон, суйлав прави классен кĕрешĕвĕн орутийĕ мари?" тесе ыйтаť Фетăрăв. Мĕн тума кирлĕши ку ыйту? Литтераттурăн клас характĕрне хуплама марши? Ес çĕмĕрекен пленăм ђленĕсенђен кам, тата хăш вăхăтра литтераттурăна суйлав правипе, хаçатри фелйеттонпа пур йенђен те танаштарнă? Пленăмра токлат тăвакансенђен? Танаштарман та, шухăшламан та!

Ку, ђăннипех те, Тон-Кихот çил арманĕсемпе кĕрешнипе пĕрех ĕнтĕ. Фетăрăв: ђăваш кĕнеки-хаçађĕсенђе литтераттурă спетсификкăмне никам та ăнлантарса паман, тет. Ăнлантарса паман пулсан, мĕншĕн есĕ малтан çавна ăнлантарса памарăн? Есĕ ăна асăннă статйара та ăнлантарса пама мар, ăнланмалла мар тума кăна пулăшнă.

Хаçатри статйапа хутошĕствăллă происветени хушшинђе уйрăмлăх пуррине такам та пĕлет, анђах уйрăмлăх итеолокире мар, итеолокине урăх тĕрлĕ майпа каласа панинђе. „Спетсификкăм" сăмаха пин хут каласан та, темиçе тĕрлĕ пăркаласан та, вăл искуствăн ăрасналăхне ăнланма нимĕн ђул та пулăшмасть. Литтераттурăн спетсификкăмĕ, ăрасналăхĕ—опрăсра. Хаçатри статйа хутошĕствăллă происветенирен опрăслăхпа уйрăмланса тăрать. Литтераттурă—опрăссен çиçтеми тес пулсан, опрăс мĕнне тĕплĕ ăнлантарса парас пулать.

## Формăпа сотершани.

Фетăрăв литтераттурă опретеленине пăтратнă пирки, „литтераттурă—классен кĕрешĕвĕнђе вăйлă орути пулса тăрать" тенине литтераттурă опретеленине кĕртме шухăшламан пирки, формăпа сотершани мĕн иккенне те, вĕсем мĕнле çыхăнса, хутшăнса тăнине те кирлĕ пек тĕплĕ ăнлантарса параймасть.

„Ђăваш литтераттурне пăђлантармасăр, унăн хресђен питне сĕвеймĕн" тет Фетăрăв. Тĕрĕси çапла калани? Паллах, тĕрĕс мар. Мĕншĕн тесен литтераттурăра „хресђен тирне" сўсе пăрахни, „пролеттари питне" тăхăнтарни пулмалла халђи вăхăтра. Апла пулсан, пролеттари питне тăхăнтарни, Фетăрăв шухăшĕпе, ђăваш илемлĕ литтераттурине пăђлантарни, пĕтерсе лартни пулать. Хресђене

пролеттари тумĕ тăхăнтарсан, вăл вилет тенине кам ĕненĕ?! Ђăваш илемлĕ литтераттурин хресђенле формине (питне) сӳсе пăрахни, пирĕн шутпа, ăна çӳлерехри пусăм çине хăпартнине пĕлтерет. Ђăваш илемлĕ литтераттурине пирĕн майĕпе урăх тум тăхăнтарса пымалла, вăл тум—пролеттарилле формă пулмалла. Ђăваш илемлĕ литтераттурине пролеттарилле сотершанипе тултарса, пролеттарилле тум тăхăнтарни ăна пăђлантармасť, тата çивĕђ ђĕлхеллĕ, вирлĕ опрăслă, етеме çĕнĕ хăватпа çунатлантаракан сотершанилле литтераттурă тума пулăшаť, ђăваш литтераттурине калама çук пуйанлатса, ăна тĕлленмен виçене хăпартса йама пултараť. Çавăнпа ђăваш литтераттурин хресђенле „питне" сӳсе пăрахса, ăна çĕнĕ „пит" тăхăнтарни, йе „ђăваш литтераттурине пăђлантармасăр ун хресђен питне сĕвеймĕн" тени, реаксилле шухăш пулаť. Çавнашкал калаçнинђе маркçисăм мĕлки те çук.

„Совет влаçне тата сотсиалисăм тăвас ĕçе вĕçĕмсĕрех урăхла каласан, нумай вăхăт хушши икĕ ă р а с н а никĕссем çинђе: пĕрлештернĕ шултăра промышлĕннăç никĕсĕпе ђи çапаланђăк тата кайа йулнă, вактĕвек-таварлă хресђен хуçалăхĕн никĕсĕ çинђе тытса тăма пулмасť. Йалхуçалăхне майĕпе, пĕр ђарăнмасăр, çирĕппĕн çĕнĕ технĕккăллă никĕс çине, шултăра происвотствă никĕсĕ çине куçарса пымалла, ăна сотсиалисăмлă промышлĕннăç патне туртса пымалла. Йе епĕр çак сатађа пурнăçа кĕртетпĕр,—вара çĕнтересси паллах, йе епĕр вăл сатађран пăрăнса кайăпăр, ăна пурнăçа кĕртеймĕпĕр,—вара кăпиталисăм патне кайалла тавăрнассинђен хăтăлма çук" тет Сталин (Сталин—„Вопросы ленинизма", ГИЗ, 1929, 509 стр.). Хресђен форми çинђен каланă кунта, Фетăрăв йулташ! Хресђен питне сӳсе пăрахасси çинђен

çырнă кунта, Сталин епĕр хресҍен питне сӳсе пăрахмасан пĕтсе ларма пултаратпăр тени ҍăмласа памасăрах паллă. Литтераттурă форми мĕнле улшăнса пынине тĕплĕ ăнланас тесен, малтан çак Сталин каланă сăмахсене тĕплĕ тавçарса илес пулаť. Йе есĕ, вĕреннĕ çын, пире: науккăна политтĕкпе хутшăнтаратăр, тейĕни?

Ҍăваш литтераттури пролеттарилле сотершаниллĕ, хресҍен формиллĕ пулмалла тени, тĕрĕс пулсан та, вăхăтлăха кăна тĕрĕс. Мĕншĕн тесен унашкал литтераттурă пирĕн хаљ те пур. Пирĕн литтераттурăн формийĕ те, сотершанийĕ те пролеттарилле пулмалла. Пирĕн ҍăваш пролеттарилле литтераттуришĕн кĕрешмелле.

## Илемлĕ просветени сотершанийĕ.

Фетăрăв илемлĕ происветени сотершанине çапла опрелени параť, çапла ăнлантараť: Опйектăлатнă пурнăçри фактăсен çиçтеми, ăшри (!) пĕррелĕх саккунлăхне пăхăнат тăракан опрăссен çиçтеми—илемлĕ происветенин сотершанийĕ. Ай-уй, ҍĕлхи мĕнле, ҍĕлхи! тейĕç вулакансем. Ҍăнах та, кунашкал калаçма пуçласан, шăмăсăр ҍĕлхе те хуçăлса кайĕ. Анҍах ҍĕлхе пĕр хĕрĕнҍе тăтăрха.

Фетăрăвăн нихăш хӳререн те тыттарман „ăшри пĕррелĕх саккунлăхне" айкине тăратса хăварсан, ун шухăшĕпе, опрăссен çиçтеми—илемлĕ происветени сотершанийĕ пулаť. Фетăрăв кăшт маларах кăна: „Искуствă—опрăссен çиçтеми" тет. Искуствă та—опрăссен çиçтеми, искуствăн пĕр елеменҍĕ пулса тăракан илемлĕ происветени те—опрăссен çиçтеми. Вăкăр мĕн? тесе ыйтсан:—Выљăх, тет Фетăрăв. Лаша мĕн? тесен, каллех—выљăх, тет. Неушлĕ лашапа вăкăр хушшинҍе нимĕнле уйрăмах а çук вара, Фетăрăв йулташ?!

Искуствă—опрăссен çиçтеми, литтераттурă—опрăссен çиçтеми, илемлĕ происветенин сотершанийĕ—опрăссен çиçтеми... Апла каласа кайма, ес калашле, ђăнах та, пит çăмăл! Ним ăнлантарса тăмалли те çук. Вĕсен ăрасналăхне йарса илекен опретелени те кирлĕ пире. Есĕ ху та çавăншăн çĕмĕрлен пекки тăватăн вĕт.

Опрăс мĕн вăл?—Тăнă, ђарăннă, хытнă, çирĕпленнĕ пурнăçпа ĕçхĕл. Ӳкерĕннĕ пурнăç, опйектăланнă пурнăç—сăнлăх, опрăс, тет Фетăрăв. Ытла та пит тĕтреллĕ каланăçке, тейĕ вулакан. Килĕшетпĕр, вĕçне-хĕрне тупма çăмăлах мар кунта. Çавăна епĕр, вăхăта шеллесе, Фетăрăв опретеленисене криттĕклемесĕрех, малтан хамăр опретеленийе каласа парар.

Пирĕн шухăшпа, илемлĕ происветенин сотершанийĕ—вăл итеолоки, происветени маттериалĕнђе панă итеолоки. Малалла куна тĕплĕрех ăнлантарса парăпăр. Хаљ Фетăрăв искуствă çине мĕнле пăхнине йĕрлесе тухар.

### Искуствăпа опђĕевтă пурнăçĕ.

„Искуствă—опйектăлатнă пурнăç“ тет Фетăрăв. Пирĕн шутпа ку тĕрĕсех мар. Тĕрĕсех марри акă мĕнрен курăнма пултарать. Опйектăлатнă пурнăç вăл опйективлă пулмалла. Вăл тĕрĕс пулсан, Пиљнакăн „Хĕрлĕ йăвăç“ йатлă повĕçĕ те, йут патшалăхсене тарнă шурă писсаттĕлсем совет влаçĕпе пољшевиксем çинђен елеклесе çырнă происветенисем те опйективлă пулаççĕ тухать. Анђах çав происветенисем опйективлă марри каламасăрах паллă. Мĕншĕн опйективлă марха çав асăннă происветенисем? Мĕншĕн тесен вăл происветенисем—истори урапи çинђен ўксе йулнă, йе ун хыçĕнђен сĕтĕрĕнсе пыракан клас пултарулăхĕ пулса пыраççĕ, çавăнпа вĕсем супйективлă.

Ђăннипе, пирĕн Совет Сойусĕнђе пурнăç та вĕсем кăтартнă пек мар, пољшевиксем те „çверсем“ мар. Çавăнпа ĕнтĕ „искуствă—опйектăлатнă пурнăç“ тени тĕрĕсех пулмасť. Искуствă супйективлă та пулма пултараť, ăна епĕр çав çӳлерех асăннă происветенинђен куртăмăр. Искуствă опйективлă йе супйекивлă пуласси, ăна тăваканран килет. Класлă опђĕствăра искуствăна клас çынни тăваť, м. т. клас тулашĕнђе тăракан, опйективисăмлă çын çук вăл. Апла пулсан, искуствăн опйективлăхĕ ăна тăвакан клас опйективлăхĕнђен килет. Клас опйективлăхĕ ун историри вырăнĕнђен килет: клас малалла кайса, хăпарса, çирĕпленсе, тĕрекленсе пыраť пулсан, вăл ђи опйективлă клас пулса тăраť.

„Искуствăри пурнăçпа ĕçхĕл улшăнман, çирĕпленсе ларнă, ӳкерĕннĕ пурнăçпа ĕçхĕл. Анђах искуствăри ĕçхĕлпе пурнăç практĕккăри ĕçхĕлпе пурнăçпа пĕр тăван, искуствăри ĕçхĕлпе пурнăç практĕккăри ĕçхĕлпе пурнăçăн проексийĕ. Искуствăри пурнăçпа ĕçхĕл практĕккăри ĕçхĕлпе пурнăç, анђах вăл тăнă, ђарăннă, хытнă, çирĕпленнĕ. Ăна опрăс, ђăвашла: сăнлăх, теççĕ“. Çапла çыраť Фетăрăв. Фетăрăва пирĕн нумай пӳлĕмлĕ çурта кĕрсе кайса унтан тухма пĕлмен çынпа танаштарас килет.

Практĕккăри пурнăçпа ĕçхĕл мĕнле майпа проексиленсе искуствă происветенинђе çирĕпленсе лараťха? Опрăс сирĕн шутпа хăй тĕллĕнех пулса ларакан йапалаха вăл? Сăн „улшăнмасăр, пройексиленсе ларакан пурнăç“ тĕкĕр çине ӳкерĕннĕ пурнăçран инçе тăраťи? Йе есĕ хупа килĕшмен çынсене хăвăртрах таптаса кайас шухăшпа вĕриленсе искуствăна тăвакан çинђен манса кайрăни? Çавна шута илмесен, искуствă пурнăçпа мĕнле хутшăнса тăнине есĕ нихăçан та палăртас çук. Апсољутла опйективисăм вăл—маркçисăм мар.

Есĕ хуна хирĕçлекенсене „çăмăл ĕç илĕртет“ тесе йĕкĕлтесшĕн. Анђах ку сăмаха есĕ ху çинђенех каланă пек туйăнатъ пире. „Епĕ кунта писсаттĕл пурнăç сăнне улăштарса, хăй шухăшланă май урăхлатса çырни пирки пĕр сăмахпа та каламастăп. Вăл йăвăр та, тарăн та, сарлака та, пысăк та проплемă“ тесе çыратăн есĕ. Йăвăрринђен хăраканни, урăх никам та мар, есĕ хăвах мĕн! Есĕ вăтам шкултан анђах вĕренсе тухнисене: çăмăл ĕçпе эппаланатăр, тесе вăрçатăн пулсан, есĕ, аслă шкул пĕтерекенскер, мĕншĕн йăвăрринђен пуçламарăнха? Мĕншĕн есĕ те, тин ишме вĕренекен ађасем, ђăматăп тесе, пуçне шыва ђиксе çурăмне кăтартса пынă пек, çийелтен анђах шăйăрттарса кайатăнха?

„Хытса ларнă ĕçхĕлсем“ çинђен калаçса тăмасăрах Плехханăва сăмах парса пăхар:

„Литтературăра, искуствăра, философфире тата ыттинђе те опђĕстваă пçихолокийĕ палăратъ, опђĕстваă пçихолокийĕн характĕрĕ çав опђĕстварi çынсем пĕр-пĕринпе мĕнле хутшăнса тăнинђен, вĕсен происвотствăллă хутшăнăвĕсенђен килет. Опђĕствăн происвотствă вăйĕсем малалла кайса пынăçемĕн, çав опђĕствă ăшĕнђе çынсем хушшинђи хутшăнусем те улшăнса пыраççĕ. Анђах çынсем хушшинђи хутшăнусем (опђĕствăллă хутшăнусем) происвотствă вăйĕсен никĕсĕ çинђе хăйсем тĕллĕнех улшăнаççĕ. Вĕсене çĕнелме çынсем пулăшаççĕ“. (Плеханов, Г. В.—„Литературные взгляды Белинского“).

Фетăрăвăн „опйектăлатнă пурнăçĕ“ „опйективлă факт“ патнех пырса ларатъ, унта „фактăр“ çук. Çавăнпа Фетăрăвăн литтераттурă та—„ўкерĕнсе, çирĕпленсе, ђарăнса хытса ларнă пурнăç“ кăна. Фетăрăв литтераттурă пурнăçра çуралса, çав пурнăçах активлăн хутшăннине ăнлан-

масть. Илемлӗ литтераттурӑра супйектпа опйект мӗнле хутшӑнса тӑнине ђухлаймасть.

Пӗр-пӗр опђӗствӑри ҫынсен ушкӑнӗн активлӑ пурнӑҫӗ (бытие), ҫав опђӗствӑри ҫынсен ушкӑнӗн творђђӗствин супйекђӗ те, опйекђӗ те пулса тӑраканскер, хӑйне тата урӑх клас пурнӑҫне клас куҫлӑхӗ витӗр пӑхса тӑракан опйективлӑ пурнӑҫ кӑна мар, вӑл, пуринђен малтан, класлӑ пурнӑҫ, пӗр-пӗр опђӗствӑри ҫынсен ушкӑнӗн творђђӗстви—пуринђен малтан, классен кӗрешӗвӗнђи орути, пӗр-пӗр класа хӑйӗн тӗреклӗхне ҫирӗплетме пулӑшакан йапала. Акӑ ҫакӑнта „пуринђен малтан“ тесе кӑтартса пани Фетӑрӑвӑн ниҫта та ҫук, ниҫта та палӑрмасть. Ҫавна палӑртмасан, сӑмахсене тем тӗрлӗ авкаласан та, литтераттурӑ ҫине, искуствӑ ҫине маркҫисӑмла пӑхаймӑн, маркҫисӑмла аналис параймӑн.

### Илемлӗ происветенире итейӑ пури?

„Искуствӑри ӗҫпе пурнӑҫ конкретлӑ ӗҫпе пурнӑҫ, практӗкла ӗҫпе пурнӑҫ мар пулсан, илемлӗ происветенисенђе итейӑ та пулма пултараймасть“, тет Фетӑрӑв.

Пирӗн шутпа апла мар, искуствӑри пурнӑҫпа ӗҫ, конкретлӑ пурнӑҫах мар пирки, вӑл ҫын пуҫӗнђе ӳкерӗннӗ пурнӑҫ пулса тӑнӑ пирки, илемлӗ происветенисенђе итейӑ пур. Конкретлӑ пурнӑҫра, приротӑра, калӑпӑр йуманра, вӑл вӑрманта тӑнӑ вӑхӑтра нимӗнле итейӑ та ҫук. Йуманах касса йӑвантарса, унтан етем скуљптурлӗ происветени, сӑмахран Ленин кӗлетки туса площђӗте кӑларса тӑратсан, унта итейӑ ҫук тесе калаймӑн вара. Итейӑна унта Ленин опрӑсӗнђе панӑ. (Паллах, ку примитивлӑ пример кӑна).

Фетӑрӑв: „Йури Сайтсӗвӑн „кӗллесе тупнӑ ҫӑкӑр татӑки“ карттинӗнђе мӗнле итейӑ пур? Нимӗнле итейӑ

та çук“ тет. Анђах пирĕн Фетăрăвăн пек софиçтĕккăпа аппаланса ларма вăхăт çук халĕ. Происветенире итейă пур, анђах вăл унта хăйне майлă шăранса ларнă, çавăнпа епĕр ăна тӳрех ђухласа илейместпĕр.

„Литтераттурă конкретлă пурнăç мар пулсан, унта нимĕнле итейă та пулма пултараймасť“ (Фетăрăв).

Мĕнле ăнланмалла кăна?

1. Литтераттурă конкретлă пурнăç мар.
2. Литтераттурă--ӳкерĕннĕ пурнăç.
3. Литтераттурă конкретлă пурнăç (пыттийе) мар, ӳкерĕннĕ пурнăç (пыттийе).
4. Литтераттурăра итейă çук, ӳкерĕннĕ пыттийере итейă çук.
5. Укерĕнмен пыттийере итейă пур, пыттийере итейă пур.
6. Пыттийен ӳкерĕнмен пайĕ те пур (апсурт).

Мĕн ку? Нимĕн те мар. Пăртак шаларах кĕрсенех итеалисăмлă пăтă пулса тăраť. Çийелтен пăхма ђăн-ђăн маркçисăм пекех, шаларах ђакаласа пăхсан, сăмах пăтти кăна тăрса йулаť.

Итейăна етем пуçĕнђен, етемрен уйăрсан, сан маттериалисăмран вара мĕн тăрса йулаťха? „Шăмми те шакки“ кăна вĕт! Вара маттерипе итейă пĕррелĕхне ирĕксĕрех йышăнмалла пулмасť?

Пирĕн шутпа итейă етем пуçĕнђе ӳкерĕннĕ йапала. Йапалара вăл етем пуçĕнђе, миммисенђе ӳкерĕнеђђен нимĕнле итейă та çук. Йапала етем пуçĕсĕрех пур, ăна етем шухăшласа кăлармасť. Итейă—етем пуçĕнђи мимми ĕçлесе тунăскер. Вĕт çав ӳкерĕннĕ йапала, йапала сăнĕ итейă пулаť те ĕнтĕ. Итейă вăл етем пуçĕнђе çуралаť. Çавăнпа пурнăçра вăл етем пуçне кĕриђђен мĕнле итейă шыратăнха есĕ, Фетăрăв йулташ?

## Мĕн вăл итеолоки?

Итеолоки вăл итейăсен çыххи, шухăшсен çыххи, çиçтеми. Итейă—итеолоки елементĕ. Тĕслĕхе çакна илер: винтовккăна итеолоки тесе шутласан, унăн кашни уйрăм пайĕ итейă пулаť. Анђах салатнă винтовккăн пайĕсене пĕр çĕре купаласан, перекен винтовккă пулман пекех, итейăсене пĕр çĕре купаласан та итеолоки пулмасť. Итеолоки вăл—итейăсен йĕркеллĕ çыххи. Хутошĕствăллă итейă— шухăш çеç мар, сисĕм те.

Класлă опђĕствăра илемлĕ происветени те, вăл йенђен, тĕрлĕ клас итеолокийĕпе пултарăнма пултараť.

Кокăљăн пĕр происветенийĕнђе Ваккула тимрĕç Питĕре, Кĕтерин патша патне, хăйĕн йуратнă хĕрĕ Оксанă ваљљи „ђеревиђки" илме шуйттан çине утланса кайаť. Пурнăçра етем шуйттан çине утланса çӳренине кам курнă? Унашкал ĕç пурнăçра пулати? Унашкал ĕç те, пурнăç та çук. Апла пулсан ăçтанха вĕсем? Вĕсем çын пуçĕнђе, шухăшлăхĕнђе, итеолокинђе! Çакăнтан епĕр искуствă конкретлă пурнăç çеç маррине куратпăр. Искуствăри пурнăç вăл—опђĕствăри çын пуçĕнђи итеолокиллĕ присмă витĕр хуçăлса тухнă пурнăç. Çавăнпа илемлĕ происветенин сотершанийĕ те „ахаљ" пурнăç мар, итеолоки пулса тăраť.

Анђах çапла калани кашни уйрăм происветенирех пакарта тухиђђен итеолоки шырамаллине пĕлтермест. Вĕсене пĕлтерсе, çыхса, пĕтĕçтерсе пăхма пĕлес пулаť. Хутошнĕк тепĕр ђухне вĕренмелле ниме те пĕлтермен йапалала та тума пултараť. Çавăнпа уйрăм йапалана ыттисем хушшинђен туртса кăларса: ăçта кунта итейă? тесе çухăрни—ниме йурăхсăр ĕç, айванла ыйту.

Искуствă пĕтĕмĕшпех сотсиаллă, опђĕствăллă йапала. Çавăнпа уйрăм происветенисем хăйсем тĕллĕн кăна

хăйсене уйрăмăн, пĕтĕм литтераттурăран ђĕлĕнсе тўрех тухса „паçис“ тенине (никĕс) ўкерсе пама пултараймаççĕ. Паçис та хăйĕн сăнне уйрăмăн илнĕ происветени çине, ăна ђĕлсе илсе мар, пĕтĕм литтераттурă, искуствă çине çаптарат̆. Паçис сăнĕ литтераттурă йе искуствă происветенийĕ çине, пĕтĕм литтераттурă, пĕтĕм искуствă урлă, политтĕк урлă çапăнат̆.

„Анђах итейăллă происветенисем çук мар. Сăмахран: Тўмер Виктăрĕн пйессисем, Шăпђăкăн „Хăрахкуç Йакку“ калавĕ. Çав çавах çавна астутарам: асăннă происветенисенђе итейă мар, „тентентси“ кăна, тет Фетăрăв.

Мĕне пĕлтереççĕха ĕнтĕ çак сăмахсем? Вĕсем „итейăллă“ происветени çыракансенђен кулнине пĕлтереççĕ. Çав сăмахсем „искуствă искуствăшăн“ текен теори патне çул уçса параççĕ. Тўмер Виктăрĕн пйессисем—пролеттарилле шухăшлă пйессăсем. Илĕпĕр „Совет суйлавĕ“ пйессăнах. Вăл пйессăра хаљхи пурнăçăн пĕр татăкне илсе кăтартнă. Пйессăра комунис Тимухха кулак Шампапа тата ун кĕслипе ташлакансене хирĕç кĕрешет. Пйессăра икĕ ушкăн кĕрешеççĕ: пĕр йенђе—Шампа, тата ун майлисем, тепĕр йенђе—Тимухха комуниспа ђухăнсем. Тимухха комунис йертсе пынипе ђухăнсем кулаксене суйлавра çĕнтерсе çийеле тухаççĕ. Мĕншĕн Фетăрăв ку пйессăра „тентентси“ кăна тесе калаçат̆ха? Итеолокишĕн, политтĕкшĕн, политтĕк ĕçне хутшăннăшăн. Унăн „тентентси“ сăмахĕ çавна пĕлтерет. Ун шухăшĕпе искуствă политтĕк ĕçне хутшăнмалла мар тухат̆. Фетăрăв пек калаçни (ирĕклĕи, ирĕклĕ мари) искуствăн усăллăхне хупласа лартма, пытарма тăрăшни пулат̆.

Ђăнах та, Тўмер пйессисене те, Шăпђăкăн „Хăрахкуçне“ те мухтамаллийех çук, анђах „итейăшăни“? Вĕсем нађарри „итейăран“ та мар, тентентсирен“ те мар, ку

вёсем происветенисенђе шухăша лайăх опрăсласа парайманнинђен килет.

Тата ытларах калам: сăлтав кунта „тентентсире“ мар, сотершани хăйне вађђи çыпăçуллă формă тупайманнинђе, сотершанийĕ хађхи пурнăçпа тан пыраĭ, маларах та иртсе кайаĭи тен, форми хыçалта, хŷрере сĕтĕрĕнсе пыраĭ. Вĕсен çитменлĕхĕ форминђен килет.

### Опрăс, фапулă, сотершани.

Фетăрăв шухăшĕпе, опрăспа илемлĕ происветени сотершанийĕ пĕр йапалах пулса тăраççĕ. Пирĕн шутпа аплах мар. Сотершанийе епĕр фапулăпа та, опрăспа та пăтратмастпăр.

Фапулă вăл—çŷшет тăрăх йĕркеленекен маттериал, сопыттисен йĕрки. Сотершани маттериал çеç мар, унта тата итеолоки кĕрет. Сотершани вăл—маттериал ăшĕнђе панă итеолоки. Опрăс—итеолокийе памалли, тыттармали май, меслет. Урăхла ăна хутошĕствăпа итеолокиллĕ формă теççĕ.

Плехханăв акă мĕн калаĭ: „хутошнĕк хăйĕн итейне опрăссемпе каласа параĭ, пуплитсис хăйĕн шухăшне локиккăллă вывăтсем туса ăнлантараĭ. Писсаттĕл опрăссемпе шухăшлас вырăнне локиккăлла шухăшлаĭ пулсан, опрăссене вăл пĕр-пĕр темăна ăнлантарас шутпа шухăшласа кăлараĭ пулсан, вăл хутошнĕк мар, пуплитсис. Анђах çапла калани хутошĕствăллă происветенире итейă нимĕнле вырăн та йышăнса тăманнине пĕлтермест. Тата ытларах калам итейлă сотершанисĕр хутошĕствăллă происветени пулма пултараймасĭ (Г. Плеханов—„Искусство и общественная жизнь“).

Хутошĕствăллă происветенире итейă çук тесе калаçни тŷрех „искуствă искуствăшăн“ текен теори патне илсе

пыраҫ. Вăл искуствăн класлă сотершанине, характĕрне хуплама пулăшни пулаҫ. Ҫавăнпа вăл реаксиллĕ теори пулса тăраҫ.

### Пире „тентентсиллĕ литтераттурă“ кирлĕ тенине мĕнле ăнланмалла?

Фетăрăв епĕ Ђ.П.П. Ассотсиатсин пĕлтĕрхи пленăмĕнђе „пире тентентсиллĕ литтераттурă кирлĕ те ĕнтĕ“ тенине хирĕҫ кĕрешет.

„Тентентсиллĕх—итейăшăн (итеолокишĕн тесе вулă! И. М.), тĕп шухăшшăн опрăссене, опрăс ҫиҫтемине ирĕксĕрлени“ тег Фетăрăв. Камшăн мĕнле вĕт?

Анђах малтан мĕнле „тентентсилĕх“ ҫинђен, тата мĕнле майпа калаҫнине аса илес пулаҫ. Епĕр пленăмра „пакон сукмакĕпе“ кайакан литтераттурăна хирĕҫ тăрса,— пире пролеттарилле тентентсиллĕ литтераттурă кирлĕ, терĕмĕр. „Пакон сукмакĕпе“ кайакансем, епĕр ђăваш литтераттуринђе пролеттарилле итеолокишĕн, пире: сирĕн искуствă ҫук, есĕр тентентсиллĕ литтераттурăшăн, теҫҫĕ. Епĕр калатпăр: ђăн, епĕр ҫавнашкал „тентентсилĕхшĕн“, пролеттарилле итеолокиллĕ литтераттурăшăн, тетпĕр. Вĕсем: епĕр тентентсилĕхе хирĕҫ, епĕр искуствăшăн, илемлĕхшĕн теҫҫĕ. Епĕр илемлĕхшĕн кăна кĕрешместпĕр.

Анђах тентентсисĕр литтераттурă пулнăши, пурши тĕнђере? Пулман та, хаљ те пулас ҫук. Тентентсилĕхе хирĕҫ тăракан, искуствăшăн анђах ĕҫлетпĕр текен писсаттĕлсем те тентентсисĕр происветени тăвайман. Пĕр клас тентентсипе хирĕҫ тăракан хăй сисмесĕрех те тепĕр клас тентентсийĕпе тулма пултараҫ.

Тентентсилĕхе епĕр литтерттура пĕр-пĕр класитеолокине пăхăнса тăмаллине пĕлтерекен сăмах вырăнне ăнланатпăр. Вантер тентентсилĕхе тем пекех хирĕҫ, вăл

Фетăрăв пек „опйективисăмшăн“ тăраť. Вантер пире литтераттурăра пролеттариат итеолокишĕн кĕрешнĕшĕн „политические доносчики“ тесе вăрçаť, Фетăрăв „приспосоплентсăсем“ тет (кăшт çемçерех!). Вантер тентентсисĕр происветени çырас тесе, опйективисăмлă происветени çырас тесе, реаксиллĕ, контр-револђутсиллĕ, калама çук тентентсиллĕ происветени çырнă („Вĕренӳ çулĕпе“—„Утăмра“ çапăннă). Çапла вара опйективлă происветени пулас вырăнне, супйективлă происветени пулса тăнă.

Тентентсилĕх кирлĕ мар, тени вăл Вантер çулĕпе иллсе кайаť. Анђах тĕрлĕ „тентентсилĕх“ пур. Епĕр пролеттарилле „тентентсилĕхшĕн“ кăна тăратпăр. Акă, хаљ ĕнтĕ малтан лартнă ыйтăва та ответ пама пулаť: тентентсилĕх камшăн „опрăссен çиçтемине ирĕксĕрлеме“ пултараť?

Пролеттарилле тентентсилĕх вăл пролеттариат шухăшлă çыншăн опрăссене ирĕксĕрлени пулмасť, вăл зĕсене тата вирлĕрех тума кăна пулăшаť. Çавăнпа пролеттарилле „тентентсилĕх“ пролеттариат итеолокиллĕ писсаттĕлшĕн тĕрĕсси тентентсилĕх те мар, вăл унăн орканикла йапали (органическое свойство). Çапла ăнланнă тентентсилĕхшĕн епĕр кирек-хăçан та тăма хатĕр!

Пример: Хĕрлĕ çар краштăн вăрçинђе тем пек пысăк йăвăрлăхсене пăхмасăр, тĕнђери кăпиталиссен çарĕсене таптаса, çĕмĕрсе тăкнине мухтакан йурра, сăмахран акă çакнах илер:

Веди-ж, Буденный, нас смелее в бой!
Пусть гром гремит, пускай пожар кругом,
Мы—беззаветные герои все,
И вся та наша жизнь есть борьба“.
„Ведь от тайги до Британских морей
Красная армия всех сильней.

Кăпиталиссем: пăхăр-ха, кашни сăмахрах тентентси, йепле тентентсиллĕ пољшевиксен искустви! теме пултараççĕ, калаççĕ те. Пиренштĕн вăл йурăра нимĕнле тентентси те çук, вăл пирĕн ђĕререн шăранса тухаť. Çав вăхăтрах кăпиталиссем апла каланине хирĕç епĕр: пире çавнашкал тентентсилĕх кирлĕ те, çавнашкал „тентентсиллĕ" йурă кăна пирĕн ђĕрене пыраť, тесе калама пултаратпăр. Пурте тĕнђе çине, пурнăç çине мĕнле пăхнинђен килет. Плехханăв та ун çинђен çаплах ăнлантараť (Бельтов—„Эстет. теория Чернышевского" пăхăр).

Йулашкинђен „тентентсилĕх" пирки çакна калас килет тата. Франтсуссен аслă револютсийĕ умĕн кăпиталисăмла пуршуйсем Титро урлă: çитĕ ĕнтĕ корољсемпе çар çыннисене кăтартни, кăтартăр пире пурнăçа, халхи пурнăçа ђăннипе кăтартăр пире, „виççĕмĕш сослови" çыннине—усламçăна (купсана), кăпиталиса, тесе пурне те илтĕнмелле каланă пулсан, хаљ епĕр: çитĕ ĕнтĕ кулакпа офитсерсене, усламçăпа нăйкăшакан интеликентсене кăтартни, тавай пире пурнăç, кăтартăр пире сотсиалисăм тăвас тĕлĕшпе хĕрӳллĕн ĕçлекен „тăваттăмĕш сослови" çыннине—ĕçлекене, патрака, комуниса! тесе пурне те илтĕнмелле калама пултаратпăр та, калатпăр та. Анђах çапла калани темăсене ĕçлекенсен, патраксен пурнăçĕнђен çеç илсе çырмалла тени пулмасť. Ку сăмахсене, пуринђен малтан, итеолоки йенђен ăнланас пулаť.

## Маркçисăмла криттĕккăн сатађĕсем.

„Криттĕккăн тĕп сатађĕ—илемлĕ происветенин сотершанипе формине ăнлантарса парасси. Криттĕклеме пуçласса формăран те, сотершаниren те пуçлама йураť; пур происветенисемшĕн те пĕр йĕрке пулма пултараймасť" (Фетăрăв).

Криттёккăн тĕп сатаҫне çапла ăнланнипе епĕр пĕтĕмпех килĕшетпĕр. Анҫах çак шухăша тĕплĕрех ăнлантарса памасăр нийепле те иртсе кайма пултараймастпăр. Сотершанийе ăнлантарса парас тени мĕне пĕлтерет? Вăл хутошĕствăллă просветенин пурнăçри паллăхне, сотсиолокиллĕ еквивалентне тупса парасси пулаť. Ăна мĕнле майпа тупмалла? Плехханăв ку ыйтăва хирĕç çапла ăнлантарса параť: Тĕнҫе çине маттериалисăмла пăхакансен йенҫе тăрса, епĕ çапла калатăп: литтераттурă просветенин сотсиолокиллĕ еквивалент тенине тупмашкăн çав хутошĕствă просветенин итейне (итейне! Фет. йул!) искуствă ҫĕлхи çинҫен сотсиолоки ҫĕлхи çине куçарас пулаť—çакă криттĕккăн пирвайхи сатаҫĕ пулса тăраť, тет Плехханăв. Сан итейăсăр просветенисем пырса лексен, вара криттĕккăн хупланас пулҫĕ вĕт!

Искуствă ҫĕлхи çинҫен сотсиолоки ҫĕлхи çине куçармалла тени вăл—опрăссен çиçтеминҫе панă итеолоки мĕнле клас итеолокийĕ пулса тăнине кăтартса парасси пулаť. Сотсиолокиллĕ еквивалент тупас ĕç—хутошĕствăллă просветенийе классен тĕлĕшĕнҫен салатса пăхса, сăнаса тухас ĕç пулса тăраť.

Фетăрăв, пĕр йенҫен, „просветенин пурнăçри еквивалентне" тупассишĕн тăраť, çав вăхăтрах литтераттурăна класлă хак парассине, ун класлă ăшҫиккине палăртакан йапалана хуса кăлараť. Вăл ыйтăва Фетăрăв пек ăнлантарса пани ирĕксĕрех искуствă пĕр-пĕр класпа çыхăнса тăнине çителĕклĕ шута илмен, йе вуçех йутшăнакан теори патне туртаť. Искуствă хăйне çуратнă класпа çыхăнса тăнине çителĕклĕ шута илменни вăл—маркçисăмла искуствăветенирен тĕщне кăларса илсе хуппине кăна тăратса хăварни пулаť.

Маркçисăмла криттĕклекенĕн сатаҫĕ литтераттура

происветенин сотсиолокиллĕ еквивалентне тупнипе çеç пĕтмест. Унăн тата происветенин илемлĕхне хак памалла. Ку ĕнтĕ—хутошĕствăллă происветенин форми мĕн ђухлĕ çыпăçуллине кăтартса парасси, сотершанипе формăн пĕррелĕхне курасси, сотершани формă ăшне кирлĕ пек шăранса ларайнипе ларайманнине кăтартасси, опрăссем çын ăшĕнђи „ђĕлĕхсене“ йанратма пултарассипе пултарас çуккине, мĕн ђухлĕ пултарассине курма пĕлесси пулса тăрать. Акă мĕншĕн епĕр: критгĕккăн сатађĕ—сотершанипе формăна ăнлантарса парасси пулать, тетпĕр.

„Литтераттурă—классен кĕрешĕвĕнђи вăйлă орути, тесе калаканнисем сăвăсене, калавсене, трамăсене криттĕкленĕ ђухне ку йапала камшăн усăллă: пролеттарисемшĕни, хресђенсемшĕни, йе пуршуйсемшĕни, теççĕ те, ĕçĕ те пĕтет. Ăна кура, писсаттĕлĕ те йе пролеттарисен, йе хресђенсен, йе пуршуйсен „йуррине“ йурлакан писсаттĕл пулса тăрать, тет Фетăрăв çавăнтах. Камсем апла криттĕкленине пĕлместпĕр те, пĕлме те тăрăшмастпăр, пире вăл кирлех те мар. Анђах Фетăрăв каланă пек криттĕккăн çитменлĕхĕсем çук мар, пур. Çавăн пек криттĕккăн çитменлĕхĕ, происветени çине пур йенђен те пăхма пĕлейменнинђе, йе йури апла пăхса тăманнинђе. Анђах мĕншĕн вăрçатха Фетăрăв çав криттĕккăна? Асăннă криттĕккă литтераттурă—классен кĕрешĕвĕнђи вăйлă орути пулса тăни çине уртăннăшăн, происветени çине çав йенђен ытларах пăхнăшăн, пуплитсисла хак панăшăн.—Мĕн çухăратăр, литтераттурă классен кĕрешĕвĕнђи орути мар, опйектăлатнă пурнăç, тет Фетăрăн вĕсене.

Фетăрăв çирĕç: пиолокиллĕ пурнăç та—пурнăç, опђĕства пурнăçĕ—пурнăçах, тахăш пурнăç çинђен калаçатăн есĕ, теççĕ. Çавăнпа пирĕн ирĕксĕрех Фетăрăва тӳрлетсе каламалла пур. Çавăнпа епĕр: литтераттурă вăл ахаљ

пурнăç кăна мар, опђĕствăри пурнăç, классен пурнăçĕ, вăл çеç те мар, тата классен кĕрешĕвĕнђи орути, тетпĕр.

Фетăрăв асăннă криттĕккăна „хăрахайккиллĕ“ криттĕккăран литтераттурăна пур йенђен те сăнама пĕлекен криттĕккă тума тăрăшмалла. Пирĕн унтан лайăх криттĕкки те çукха хаљ. Çавăнпа унăн пуплитсислăхне хирĕç тăмалла мар, вăл литтераттурăна классем йенђен сăнама пикеннине хирĕç тăмалла мар, ытти çитменлĕхсене хирĕçлемелле. Ăна литтераттурă просветенине пур йенђен те пăхса сăнама вĕрентмелле. Урăхла каласан, пуплитсисла криттĕккăран науккăллă криттĕккă туса йамалла. Анђах маркçисăмла науккăллă криттĕккă пуплитиçттĕккăна кăларса ывăтмасť, ăна хăй ăшне кĕртсе вырнаçтаратť.—Ђăн-ђăн науккăллă криттĕккă пуплитсисла мар пулма пултараймасť, тенĕ Плеххановăв.

Анђах пире пуплитсиçтĕккăшăн пит кураймаççĕ хăшпĕр çынсем. Акă Вантерех епĕр унăн „Вĕренў çулĕпе“ йатлă калавне пуплитсисла хак хурса панине „политический донос“*) терĕ. Епĕр „Вĕренў çулĕпе“ калава криттĕклесе, ун хаљхи пурнăçри опйективлă хакне кăна кăтартса патăмăр. Çавăнпа епĕр просветенийе реаксиллĕ йе, тата ытларах, контр-револђутсиллĕ тесе хак хуни, ун авттăрне хупса лартма сĕнни пулмасť. Вăл ăна, кăмăлĕ пулсан, çав йăнăша курса, унтан малашнехи пултаруллăхра хăтăлма ђĕнни пулатť. Çавăнпа криттĕккăн каслă характĕрĕ çинђен „политический донос“ тесе супĕлтетсе никама та „йусаймăн“, ху та „йусанаймăн“. Хăй просветенине тĕрĕс каслă хак панăшăн „политический донос“ тесе вăрçакана, вăл çав просветенире йурийех клас тăшманĕн шухăшне панă тесе калама та май пур. Анђах, çапах та, епĕр труках, васкавлă унашкал вывăт туса хумастпăр.

*) „Утăм“ утти йатлă статйа пирки. Рет.

Литтераттурӑри классен кӗрешӗвне хуплама мар, ӑна уҫҫӑн кӑтартса, пур пӗркенђӗксене те сӳсе ывӑтса, пулӑшса пырассинђен пӗр криттӗк те пӑрӑнма пултараймасӗ. Искуствӑ искуствӑшӑн кӑна ан пултӑр, пурнӑҫшӑн пултӑр, пурнӑҫа лайӑхрах орканисатсилеме пулӑштӑр. Искуствӑ уттилиттарлӑхне епӗр, комуниссем, шухӑшласа кӑларман, вӑл ӗлӗкех ҫавӑн пек пулнӑ, хаљ те ҫавах.

**Ђӑваш пролеттарилле литтераттурӗн никӗсӗ ҫинђен.**

„Асӑннӑ пленӑмра пӗри (Ухантей) Ђӑваш респуплӗкӗнђе пролеттарисем ҫук, ҫавӑнпа пирӗн литтераттурӑ пролеттарилле литтераттурӑ мар, хресђенле литтераттурӑ кӑна пулма пултарасӗ, терӗ. Пирӗн литтераттурӑ хресђенле литтераттурӑ тени йӑнӑш мар, анђах унпа ӗҫ татӑклӑ пулмасӗ, вӑл ыйтӑва хуплаймасӗ“ тесе ҫырасӗ Фетӑрӑв. Ҫак татӑкран, пуринђен малтан, Фетӑрӑв Ухантейӗн йӑнӑш шухӑшӗпе, пӗтӗмӗшпе пулмасан та, килӗшни палӑрасӗ, вӑл—факт. Хӑҫантанпа калаҫатпӑр ку ыйту ҫинђен, Фетӑрӑвсем ҫапах ҫине тӑрса хӑйсеннех переҫҫӗ. Фетӑрӑв хаљ те ђӑваш илемлӗ литтераттурӗ пролетарилле литтераттурӑ пулмаллипе пулма пултарасси ҫинђен хӑйӗн сӑмахне татӑклӑ каламасӗ, икӗ айккинелле те ҫаптарасӗ. Ухантей ыйтӑва ӑнланмасӑр каланине хирӗҫ татӑклӑ сӑмах каласа, ун йӑнӑшне кӑтартса парас вырӑнне, Фетӑрӑв ни унталла, ни кунталла калаҫса иртсе кайасӗ.

Ухантей шухӑшӗпе килӗшме пултаратпӑри? Нийепле те килӗшмеспӗр. Епӗр пролеттарилле литтераттурӑшӑн кӗрешетпӗр.

Ђӑваш респуплӗкӗнђе пролеттарисем ҫук пирки, ђӑваш литтераттурӗ те хресђенле литтераттурӑ кӑна пулма пултарасӗ, тени те, Ђӑваш респуплӗкне Совет Сойусӗнђен уйӑрса пӑхнинђен, тата ку ыйту ҫине тӗплӗ пӑхма

пĕлменнинҫен пулнӑ йӑнӑш. Ҫӑваш пролеттарилле литтераттурĕн никĕсне Ҫӑваш респуплĕкĕнҫе ҫеҫ шырамалла мар. Ҫӑваш хуҫалӑхĕ ĕлĕкренех промышлĕннӑҫлӑ ҫенттӑрсемпе ҫыхӑнса тӑнӑ. Ҫӑваш ҫухӑнпа вӑтам хресҫенĕ пролеттарисемпе пĕрле сотсиалисӑм тӑвать.

Лайӑхрах пӑхсан, Ҫӑваш респуплĕкĕнҫе пролеттарисем ҫук тени те тĕрĕс маррине куратпӑр: вĕсем пур, анҫах сахал—ку пĕрре. Иккĕмĕшĕ—Ҫӑваш респуплĕкĕ Совет Сойусĕнҫи пролеттарисемпе ҫĕр тĕрлĕ ҫыхӑпа ҫыхӑнса тӑрать. Йулашкинҫен, акӑ пирĕн куҫ умĕнҫех ҫӑваш ҫĕршывĕнҫе ҫĕршер, пиншер ĕҫлекенлĕ хапрӑк-савӑтсем шӑтса ӳсме пуҫларĕҫ. Вĕсем ҫӑваш пролеттариаҫĕн ҫӑмӑрне вӑйлатсах пыраҫҫĕ вĕт. Ҫӑвашсен пролеттарилле литтераттури ҫуралнине куҫлӑх тӑхӑнтармасӑр кураймастӑр пулсан, ҫӑваш пролеттарисен йышĕ ӳснине нимĕнле куҫлӑхсӑрах курма пулать вĕт! Ҫакӑнтан ĕнтĕ „Ҫӑваш респуплĕкĕнҫе пролеттарисем ҫук, ҫавӑн пирки ҫӑваш литтераттури те хресҫенле кӑна пулма пултарать“ тени айванла шухӑш, аҫапҫалла супĕлтетни кӑна пулса тӑнине пурте курма пултараҫҫĕ.

———

Йулашкинҫен ҫакна калатпӑр. Искуствӑ пирĕншĕн пурнӑҫ кӑна мар, ӑна улшӑнтарма пулӑшакан йапала та пулса тӑрать. Фетӑрӑв сӑмахпа: епĕ литтераттурӑна классен кĕрешĕвĕнҫен кӑларса пӑрахмастӑп, тет. Статйинҫи ӑнлантарусенҫе ӑна кӑларса пӑрахманни ниҫта та курӑнмасть. Фетӑрӑв статйинҫен ҫакӑн пек вывӑт тумалла: литтераттурӑ классен кĕрешӳне кӑтартать кӑна, пĕр-пĕр йенне тӑрса активлӑ кĕрешмест. Фетӑрӑв йӑнӑшĕ—литтераттурӑ ҫине, тĕнҫене „улшӑнтарасси“ ҫинҫен калаҫмалла ҫух, тĕнҫе „мĕнлĕхне ӑнлантарса“ панипе кӑна ҫырлахакан „профессӑрсен“ теори тӑрӑх пӑхнӑран пулнӑ йӑнӑш.

# „Утăм“ утти.

„Классен кĕрешĕвĕ пирĕн хаљхи вăхăтра пур çĕрте те ђарăнмасăр пынă пекех, литтераттурă фронтĕнђе те вăл çаплах ђарăнмасăр пырать“ (ПСК(п)П Тĕпкомĕ парттин илемлĕ литтераттурă ĕçĕнђи политтĕкĕ çинђен йышăннă ресољутсирен).

Кулак таврашĕсем çак иртнĕ çулсенђе пуçĕсене çĕклерĕç. Йалти вăйланса пыракан сотсиалисăм тăвас ĕçе кулак мĕн вăй çитнĕ таран ђăрмантарса пыма тăрăшать. Ахăрма пуçланă кулак çилли, кулак шухăшлăхĕ, кулак ĕмĕђĕ илемлĕ литтераттурăна та сăрхăнса кĕђĕ. Кулаксем илемлĕ литтераттурăра та хăйсен претставиттĕлĕсене тупрĕç. Асăрхаса вулама вĕренмен вулакансем вĕсене астумасăр та иртсе кайма пултараççĕ; сисмесĕрех вĕсем мĕне кăмăл тунине те кăмăл тума пултараççĕ. Çавăнпа маркçисла криттĕккă умĕнђе çав кулакла литтераттурă претставиттĕлĕсене, вĕсем çинђен хĕрлĕ пĕркенђĕке сирсе, хĕвел çуттине кăларса тăратас сатађ тăрать.

„Утăм“ Ђăваш Пролеттари писсаттĕлĕсем „Канаш“ Сойусĕн Хусанти Çексийĕн аљманахĕ. 1929-мĕш çулта „Утăмăн“ 2-мĕш № тухрĕ. „Утăма“ пролеттари писсаттĕлĕсен йађĕпе кăлараççĕ, анђах унта пролеттарилле литтераттурă йатне пыракан пĕр йапала та çук. 2-мĕш № „Утăм“ утти пĕтĕмпех урăх йеннелле кайать.

Ăçталла утать „Утăм“? Ун çинђен „Сунталăн“ иртнĕ (5—6 № №) номĕрĕсенђе статйасем çапăнса тухнăђђĕ.

Вĕсенђе „Утăм“ ăçталла сулăннине, унта çапăннă хăшпĕр. просветенисене тишкерсе тухса, тĕллесе панăђђĕ, Çавăнпа ман умра çав статйасен авттăрĕсен калайманнине каласси, вĕсем асăрхаман хăшпĕр йăнăш шухăшсене палăртса, „Утăм“ аљманах ăçталла çул тытнине кăтартса парас сатађ анђах тăрат̆.

„Утăмра“ **Рсайăн „О, хĕвелĕ“** ђи малтанхи йапала. Ăна малтан йани ретколеки вăл калава ыттисенђен аванрах шутланине пĕлтерет пулмалла. «О, хĕвел», тĕрĕс каластăк, калав мар, ескис пулат̆. Анђах ескис пулин те, вăл пулса çитмен, вĕçленмен йапала пек курăнат̆ (авттăрĕ, çапма панăскер, урăхла шутлат̆ пулмалла). Конструксиллĕхĕ те унăн нађар. Теми: вăрçă сийенĕ. Вăл темăна авттăр февраљ револђутсийĕ вăхăтĕнђе сарăмласа кăтартасшăн пулнă. Ватă Куçма (ђăваш хресђенĕ) малтан пĕртен-пĕр ывăлне салтака илесрен хăрат̆, унтан ывăлне илеççĕ—Куçма куђанат̆. Ку темă Рсайшăн кивĕ. Вăл унашкал темăпа çырнă. Çавăнпа ку ескисрен Рсай малалла кайни курăнмаст̆. «Аслати умĕн» те акă çак темăпа çырăннă. Çапла Рсай писсаттĕл Рсай поетăнне вăрланă тухат̆.

Хамăр сăмаха çирĕплетме примерсем илсе кăтартар.

„О, хĕвелре“—«Ех, ку вăрçă, кама кирлĕши вăл вăрçă? Куçман пĕрех ывăл, ăна илсе кайсан, Куçма хăй пек ватă лашапа çеç йулат̆, тесе никам та каламарĕ. Илђĕç вĕт ывăла, çаплах илсе кайрĕç, хĕрхенмерĕç».

„Аслати умĕнђе“:

„Пайан Мишук йаш ывăлне ăсатнă.
Йаш ывăлне ăсатнă салтака.
Ун çемйинђен татах пĕр çынна катнă,
Мĕнпурĕ виççĕ карĕç тамăка“.

„О, хĕвел“ пĕтессе те „Аслати умĕн“ майлах пĕтет.

„Ăçта ман Пеťкка, Пеťкка ăçта,—тесе макăрнă Куçма („О, хĕвел“).

„Ашшĕ, Мишук, пĕлмест: мĕнма вĕлернĕ,
Мĕнма çухатнă ман ывăлăма?
Мĕн тунă вăл? Кама хăçан хĕненĕ?
Патша, патша, тавай ывăлăма“.

Кунтан ĕнтĕ Рсай тематтĕк тĕлĕшĕнђен, ђăкăмăçла лаша пек, пĕр вырăнта тапăртатса тăнине куратпăр. Пĕр вырăнта тапăртатса тăни мĕнрен килетши: темă тупма пĕлменнинђенши, йе урăххинђенши? Пирĕн шутпа, ку Рсай шухăшлăхĕнђен килет.

Рсайсем илемлĕ литтераттурăра тентентсилĕх тенине, автăр мĕнле клас шухăшлăхне, итеолокине хапăл тунине происветенире палăртнине хирĕç пыраççĕ. Вĕсем: епĕр пуринђен малтан искуствăшăн ĕçлетпĕр, теççĕ. Çак шухăша вĕсем „Сунталра“ ĕçлекенсем—происветенире пуринђен малтан пролеттарилле ăшђике асăрхамалла, писсаттĕл хăйĕн калавéпе, йе сăввипе ĕçлекенсен класне сотсиалисăм тăвас ĕçре пулăшмалла, тенине хирĕç тăратрĕç. Вĕсем „Сунталра“ ĕçлекенсене: есĕр пролеттарилле тентентсилĕхпе искуствăна пĕтерсе лартатăр. Пире тентентсилĕх кирлĕ мар, епĕр ăна хирĕç, тетђĕç.

Çапла вĕсем ђăваш илемлĕ литтераттуринђи пролеттарилле тентентсилĕхе хирĕç пырса, хăйсен сĕрмен урапи çине ларђĕç те, пĕкки çине „пуринђен малтан искуствă“ тенĕ лосăнка çакса аваллăха кустарђĕç. Вулакана халђ Рсай тематтĕк тĕлĕшĕнђен мĕншĕн пĕр вырăнтан тапранайманни лайăх курăнмалла ĕнтĕ.

Рсай тентентсилĕхе хирĕç, анђах хăй питĕ тентентсиллĕ. „О, хĕвелрех“ вăл Керенски вăхăтне ырлаť, ун ђухнехи саманана пит килĕштерет пулас вăл. Ку тĕлĕшпе „О,

хĕвелрех“ йулашки татăкĕ умĕнхи сăмахсене вуласан, ним иккĕленмелли те йулмасť.

— «Толой патша! Война до победного конца! Сывă пултăр Вăхăтлăх правиттĕлствă! тенĕ халăх алли çинђе пыракан çын.

— Толой патша! Толой вăрçă! тенĕ хирĕç халăх. Анђах шинеллĕ çынна (праппăршђĕке тесе вула—И. М.) алă çинђен пăрахман, мĕн касçђенех çапла çĕклесе çӳренĕ».

Çапла ĕнтĕ: Сывă пултăр Вăхăтлăх правиттĕлствă! Война до победного конца! тесе çухăр, та хура халăх санăн илемлĕ сăмаххусене ытараймасăр, сана иртен пусçласа касçђенех алă çинђе çĕклесе çӳрĕ! Ĕненĕр, ĕненме хушаť Рсай.

Анђах вулакан ĕненмест, вăл тĕрĕсси мĕнле пулнине аса илесшĕн. Аса илме пултарайманни те ыйтса пĕлессшĕн тăрăшаť.

Вăхăтлăх правиттĕлствăшăн приçакă çитерсе, йалсем тăрăх камсем çӳренĕ? Праппăршђĕксемпе ессерсем. Вĕсене хура алăллисем пĕрре те çĕклесе çӳремен: хура алăллисем йе хирĕç пуплешнĕ, кĕрешнĕ, йе малалла мĕн пулĕха, куратпăр, тесе айаккинђе пăхса тăнă. Кулаксем анђах пĕтĕм ђĕререн хĕпĕртесе йышăннă вĕсене, мĕншĕн тесен кулак таврашĕ Вăхăтлăх правиттĕлствă кăмиссарĕсем урма пусçланă хура халăха йĕркене кӳртĕç тесе шаннă.

«Война до победного конца! тесе çухăракансем те кулаксемех пулнă. Апла çухăрмашкăн вĕсене, пĕр йенђен, каснара выртакан вăрçă сайомĕн опликатсийĕсем те тĕккеленĕ. Рсай кулаксемпе пуп таврашĕсене халăх туса хунă. Çапла кулакла шухăшсем кӳртеççĕ Рсайсем ђăваш илемлĕ литтераттурине.

Анђах Рсайа кунпа çеç сахал, вăл тата тарăна кĕрет.

„Çуртсене, урамсене, креппăçсене, сăртсене—пĕтĕм тĕнђене сивĕ тытнă пек ђĕтретекен çĕнтерӳ йурри шăпрах саслă йурăсене анђах итлеме вĕреннĕ хăлхасемшĕн калама çук йут йурă пулнă. Пăр пек сивĕ те хытă, хĕвел пек вĕри те çутă çĕнтерӳ йуррине тăпрапа тимĕр çинђе çитĕннĕ сынсем анђах савăнса итлеме пултарнă".

Çапла калаť Рсай февраљ револђутсийĕ çинђен. Анђах ку „йурă" пађах урăх опперăран.

Ку пĕрре те февраљ револђутси патне пырасшăн мар. Рсай ку йурра февраљ çумнех çыпăçтарасшăн тăрăшаť. Унсăрăн унăн кулакла шухăшĕ никĕсленмест пулас. Пĕтĕм тĕнђипе, сивĕ тытнă пек, ђĕтретнĕ йурă мĕнле йурă вăл? Паллах, вăл окťапĕр револђутси йурри. Февраљ револђутсийĕ тĕнђипе ђĕтретейменни çинђен каламалли те çук. Çапла Рсай окťапĕр револђутсийĕ тунă ĕçсене вăйпах февраљ револђутси ĕçĕсем тесе тыттарасшăн! Керенски вăхăтне унтан ытла ырлаймăн!

Тата пĕр тĕлте: «халăх хушшинђен хăшĕсем пасар варринђе ларакан каçонккăран ерех те кайса илме ĕлкĕрнĕ. Вĕсем: урра, йе толой, тесе çухăрнă хыççăн, путтылккă пуçĕсене çăвара ђиксе илеççĕ» тенĕ. Кунта авттăр вулакана пăртак култарасшăн пулнă пулĕ те, анђах вулаканĕ çырнинђен мар, авттăр ун ђухне каçонккăсем пулманнине, вĕсене вăрçă пуçлансанах хупса пĕтернине пĕлменнинђен кулаť.

**Вантерĕн «Вĕренӳ çулĕпе»** йатлă калавĕ ĕлĕкхи пурнăçран илнĕскер. Авттăр ку калавра вĕренни пит усăллă иккенне кăтартасшăн пулнă пулсан, ун çинђен çырмашкăн патша вăхăтне кивçене каймасăрах, халђи, пайанхи пурнăçрах пит пархатарлă примерсем тупмалла мĕн Вантер çапах та ĕлĕкхи пурнăçранах илет, вăл ĕлĕкхи пурнăça кăтартасшăн!

Мĕншĕн ĕлĕкхи пурнăçалла ђăматши Вантер? Ку ыйтăва ответ париђђен малтан калавне пăхса тухар. Автăрĕ: ку калав 1890-мĕш çулсенђе пулнине кăтартать, тет. Ђăвашла каласан, вăл „măйан çул“ ђухнехи вăхăтсемех пулаť ĕнтĕ. Ун ђухнехи пурнăçа кăтартакан калавсем çырнине хирĕç мар епĕр. Çырса кăтартнăшăн тиркеместпĕр. Анђах ĕç мĕнле çырнинђе.

Мĕнле çырнăши Вантер хăй калавне? Вăл „măйан çулсем“ вăхăтне йуратса çырнă.

Ђăваш йалĕнђе хысна шкул туса лартнă. Çĕнĕ шкулта вĕрентме уђђитлĕ килнĕ. Вăл шкул çинђен ыйтса пĕлет.

— «Нӳхреп туса пĕтермелле те, вара управ ђленĕ çеç килсе пăхмалла. Ĕç пĕтет вара, тет пупĕ те.

— Сĕтел-пукансем хатĕр пулаççĕ терĕр-и-ха есĕр? тесе ыйтаť каллех вĕрентекен.

— Хатĕр ĕнтĕ, ыран илсе килеççĕ, тет пупĕ.

— Апла пулсан, çитес тунтикун ађасене илме те йураť пулĕ?

— Йураť ĕнтĕ. Старăстăна çеç каламалла. Вăл халăха? хыпар тăвĕ....

... Вырсарникун пупĕ те ђиркӳре çавăн çинђенех хыпар турĕ».

Кунта пурте лайăх: хысни шкул лартса параť, управĕ те тăрăшаť, пупĕ те тĕттĕм халăха çутта кăларасшăн хыпаланаť. Халăхĕ çăвара карсах тĕлĕнет.

«Шкул ăшне кĕрсен, мăн çынсемшĕн те, вĕсенђен ытларах ађасемшĕн, таçта улпуг çуртне кĕнĕ пекех туйăнса карĕ. Пӳлĕмĕ ытла та аслă, мађђи çӳллĕ, ђӳређисем пысăк, шалта çап çутă.

— Хысна тем тума та пултараť çав, тет тĕлĕнсе шкула кĕнĕ ђăвашсенђен пĕри».

Вăл ђăваша çеç мар, пире те тĕлĕнтеретĕн есĕ, Вантер

йулташ. Хысна улпут çурҫě пек шкулсем лартса панă, управсемпе пупсем ҫăвашсемшěн тăрăшнă. Тěлěнмелле пит лайăх пурнăç пулнă иккен патша вăхăтěнҫе!

Хаљ ав совет влаçě халăха вěрентес ěçе ҫăваш хресҫенне хăйне хутшăнтарасшăн. Шкулсем, вуламалли çуртсем лартмашкăн патшалăха пулăшас шутпа самообло-шенисем туса иртерме тăрăшаççě. Хресҫен хуçалăхне вăй-латмалли сайомсем кăлараççě. Ěлěк хресҫенрен сулăм укçи те ыйтман, сайом илме те ыйтман, хысна хăйех пурне те туса панă. Мěншěн ырлас мар управсем вăхăтне!

Хусанта, Вантер калавěнҫе пěлтернě тăрăх, ҫăвашсене йуратакан Микулай Иванҫă пулнă, ҫăваш çамрăкěсем Хусанта вěренсе ырă курнă. Мěнле ҫăваш çамрăкě: пуйанни-и, ҫухăнни-и, уншăн пулсан пур пěрех.

Çапла, Вантер каланă тăрăх, ěлěк ҫăваша пурте вě-рентме тăрăшнă: хысни те, пупě те, управě те, Хусанти Микулай Иванҫă-миççионерсем те, пěр ҫăвашě анҫах хăйшěн хăй тăрăшма пěлмен. Çавăнпа анҫах иккен ҫăваш ěçхалăхě хушшинҫе ку таранҫҫен те хут пěлмен-нисем 60 проҫҫăн ытла шутланаççě.

Çапла ěнтě, «пуринҫен малтан искуствăшăн» кěре-шекенсем, пролеттарилле тентентсилěхе хирěç пыракан-сем, пайанхи пурнăçран, револҫутсирен тарса, иртнě, ěлěкхи, пăнтăхнă самананa мухтама тытăнаççě.

Çěршыв хуçи—ěçлекенсен класě, пěтěм ěçхалăхě комуниссен парттийě йертсе пынипе ҫавсасене тавăр-сах хěрўллěн сотсиалисăм тунă вăхăтра, сотсиалисăм тăвас ěçрен тарса сулхăна кěрсе выртса, ишěлсе çўпçап айне пулнă патша йěркине йе Керенски вăхăтне мухтани мěне пěлтеретши вăл?

Пирěн шутпа, вăл кулакпа непман шухăшне палăрт-нине пěлтерет, вěсен саккасěпе ěçленине (ирěклěи,

ирёклё мари—вăл пур пĕрех) пĕлтерет. Çак калавсем Вантерпа Рсай çĕнĕ пуршуйсен писсаттĕлĕсем пулма пуç-ланине лайăхах кăтартаççĕ. Мĕншĕн тесен вĕсем хăйсен калавĕсенђе çĕнĕ пуршуйсен ĕмĕтне уççăнах палăртрĕç.

«Утăмри» паллăрах, пысăкрах йапаласенђен тата Йалавинпа Леон Линђ калавĕсемпе Хусанкайăн „Хура пĕркенђĕк" сăввисем кăна йулђĕç ĕнтĕ. Малаллахи сăмах вĕсем çинђен пулĕ.

**Йалавинпа Линђ калавĕсем** иккĕш те уколовнăй калавсем. Йалавин калавĕнђе кађђа тухма хатĕрленнĕ. сăмах татнă хĕре тĕрмерен тухса тавăрнакан çын пус-мăрласа намăс тăваť. Йалавин калавĕн малтанхи пайне лайăх, илемлĕ сăнлăхлă çырнă. Иккĕмĕш пайĕнђе вара уколовнăй елемент кўртсен çтилĕ те пăсăлаť, вĕçĕ илемсĕр те, трук татăлса пĕтнипе калавăн хакĕ те çухалаť. Ку калав хаљхи вăхăтшăн килĕшўллĕ йапала мар.

Леон Линђăн калавĕ „Харсăр хĕрарăм" йатлă. Анђах калавĕнђе хĕрарăм пĕр вăрра персе вĕлернисĕр пуçне нимĕнле харсăр ĕç туни те курăнмасť.

Ку калавсем иккĕшĕ те опђĕствă пурнăçĕпе çыхланса тĕвĕленеймен. Ăнсăртла, епписотла йапаласем анђах. Çавăнпа вĕсем хаљхи вăхăтшăн хаксăр. Йалавин калавне илсен, вăл сийенлĕ те пулма пултараť.

**Хусанкайăн „Хура пĕркенђĕк"** йатпа пĕрлештернĕ лирĕккăлла сăввисем аљманахра вуникĕ страницă йы-шăннă. Ку сăвăсене Хусанкай Йеççенинăн «Перççи мотти-вĕсĕм» майлă çырнă. Сăвăсен тĕп шухăшĕ—ђатрана хура пĕркенђĕке сирсе пăрахасшăн тăрăшакан туркмен хĕрне кăтартасси пулнă пек туйнаť. Анђах „туйнаť çеç". Мĕншĕн тесен Хусанкай пур сăввисене те вăл шухăша витереймен. Поет хура пĕркенђĕке пăрахман туркмен хĕрне ăна сирсе пăрахма ўкĕтлет.

«Ах, мана сём ҫатăр—ҫĕрĕ тупăк,
Йе пĕрехим саншăн каҫпа ир?..
Ҫĕр айне кĕрсессĕн куҫна хупăн,
Ҫĕр ҫинҫе тархасшăн ăна сир“.

Хушăран вăл сăвăсенҫе пеҫҫимисăмпа пĕҫҫенлĕх шăрши те палăрать.

«Мĕскер калам сана йулашкинҫен,
Ăнсăртран йуратнă Асхапатăм?
Ытла киҫем-ҫке... Ытла киҫем...
Мĕскер калам сана йулашкинҫен.
«Йе пĕтĕмпех ĕнтĕ еп каласа патăм».

Поет ҫатрана пăрахнă туркмен хĕрне уйăрăлмалăх ҫапла калать.

„Вăтанса хĕрелтĕр саксаул,
Унпа манăн нимĕн ĕҫ те ҫук.
Ытала, ҫуп ту та—сывă пул!
Ес питне витмесĕр пынă ҫух
Вăтанса хĕрелтĕр саксаул.

Мĕншĕн вăтанса хĕрелмеллеши туркмен хĕрĕн хура пĕркенҫĕке сирсе ҫĕре таптамашкăн? Вăтанмалла мар, савăнмалла, хĕпĕртемелле, пирĕн шутпа, ҫуралăх паллине сирсе ывăтнăшăн. Кунта «вăтанса-хĕрелтĕр» мар, сиксе ташлатăр саксаул, тенĕ пулсан, вырăнлă пулĕҫҫĕ. Ку сăвăсем пĕр шухăшпа витерĕнменни вĕсен хакне ҫылайах йӳнетет. Сăвăсенҫе Туркестанри халăхсен опҫĕствăллă пурнăҫне кăтартакан вырăнсем те тĕл пулмаҫҫĕ.

Авттăр „Хура пĕркенҫĕке“ 1926—27 ҫ. паллă тăвать. Ҫавăнпа ку сăвăсем тăрăх поет пултарулăхĕ ҫулне кăтартма май ҫук, „Ҫирĕм улттăна“ та, „Хурине те“ авттăр ку сăвăсем хыҫҫăн ҫырнă курăнать.

Ку сăвăсем те Хусанкай ҫĕлхи пуйаннине, ун сăнлăхĕсем вăйлине тата хресҫене ҫывăххине кăтартаҫҫĕ. Сăмахран:

„Çамрăк уйăх шăп çурла, вырат̆ шурă пĕлĕте. Савăн, тусăмçăм, йурла! „Çамрăк уйăх шăп çурла“ тесе йурлăп епĕ те“.

Хусанкайăн хăйĕн çулне пит асăрхаса пырас пулат̆. Вăл вăйлă лирĕккăллă поет. Ун лирĕкки хађхи пурнăç çывăхнерех пырсан, Йеççенинран ђистийех хăтăлса пĕтсен, тата хытă, тата уççăн йанрамалла.

Кели сăвви пирки пĕрик сăмах каласа хăварас килет. Сăвви унăн „Пролеттари мусине“ йаглă. Сăвă тĕп шухăшĕ аванах. Анђах çырасса вара çурри архивла ђĕлхепе çырнă, çуррине крексен мифолокиллĕ йађĕсемпе тултарнă. Çавăнпа вара, пролеттари йатне темиçе хут асăннă пулин те, сăвăран миррăсемпе латăн шăршийех килет. Ку сăвă çĕнĕ сотершанине кивĕ формă (çтих технĕкки мар) килĕшменнине лайăх кăтартат̆ вара. Кивĕ сăнлăхсенђен сыхланма та хушат̆ вăл сăвă. Келин малашнехи творђĕствишĕн крексен мифолокийĕпе реликиллĕ кулђт словарĕнђи сăмахсенђен хăтăлни пит усăллă пулмалла.

Йулашкинђен ĕнтĕ çакна каласшăн епĕр. Алђманахăн умĕнхи сăмахĕнђе: «Ку иртнĕ пиллĕк çул хушшинђе çекси ўсрĕ: çамрăкрах писсаттĕлсем ку „çемйере“ аталанса пыђĕç... Пуринђен ытла, çекси итеолоки йенђен хыттăнах çирĕпленсе пыни, тĕрлĕ „есенинщина“ таврашĕнђен таса тăни хаклă, тесе çырат̆ ретакси. Кунтан ретакси хăйсен çекси ĕçне, ун ђленĕсен пултарулăхне тĕрĕс аналис тăвайманни, маркçисла тишкĕрсе тухма пĕлменни курăнат̆. Малашнехи ĕçре çекси труках алтанла, карта çине хăпарса ларса, çунат çапса çухăрма тăхтамаллах. Малтан утăмсене лайăх асăрхаса, сулăнђăксене кĕмесĕр, гĕреклĕн йарса пусма в ĕ р е н е с пулат̆ха. Вара алтанла çунат çапса çухăрни те килĕшĕ!

## Поетсемпе поеҫи ҫинҔен.

Епӗр, комуниссем, етемлӗхӗн пӗр куҔттур ҫеҫ пулма пултарать тенине суйа сӑмах тетпӗр, унпа килӗшместпӗр. Етемлӗх тӗрлӗ классене пайланса тӑнӑ вӑхӑтра, классен кӗрешӗвӗ хӗрсе пынӑ вӑхӑтра—клас интересӗсене пӑхӑнман, класлӑ мар куҔттур пулма пултараймасть. Ҫавӑнпа литтераттурӑ та классен тулашӗнҔе, йе вӗсен пуҫӗнҔе тӑма пултараймасть. Литтераттурӑ йе пуршуйсемшӗн ӗҫлет, йе пролеттарисемшӗн. Пирӗн Совет СойусӗнҔе, пролеттарисем влаҫ пуҫӗнҔе тӑнӑ ҫӗрте, пролеттарисен класӗн интересӗсемшӗн ӗҫлемен, унӑн итеолокине пӑхӑнман литтераттурӑ пулмалла мар.

Ҕӑваш илемлӗ литтераттури те хӑйӗн ӑшҔикӗпе пролеттариллӗ литтераттурӑ пулмалла.

Хӑшӗ-пӗри ҫапла шухӑшлаҫҫӗ: ҕӑвашсенҕен пролеттарисем ҫукпа пӗрех, ҕӑвашсем йӑлтах йалта пурнаҫҫӗ—хресҕенсем, вӗсен литтераттури мӗнле пролеттариллӗ литтераттурӑ пулма пултартӑрха вӑл? теҫҫӗ.

— Апла пулсан, еппин, сирӗн шухӑшпа Ҕӑваш респуплӗкӗнҕе пролеттарисен тиктаттурӗ те пулмалла мар пулӗ, тесе ыйтас килет ман ҫавнашкал шутлакансенҕен. Мӗншӗн тесен вӑл шухӑша вӗҫне ҫитерсен, Ҕӑваш респуплӗкӗнҕе пролеттари тиктаттурӗ пулмалла мар тухать. Епӗр ҫӳлерех: литтераттурӑ йе пуршуйсемшӗн

йе пролеттарисемшĕн ĕçлет, терĕмĕр. Пролеттарисене те, пуршуйсене те пĕрле йурăхлă литтераттурă çук. Çавăнпа ђăваш илемлĕ литтераттурин те пролеттариллĕ литтераттурă пулмасан, ирĕксĕрех пуршуйсен йуррине йурлакан литтераттурă пулма тивет.

Пролеттариллĕ литтераттурă тесе мĕнле литтераттурăна калатпăрха епĕр? Пурнăç çине, тĕнђе çине пролеттариат куçĕсемпе пăхакан литтераттурă—пролеттариллĕ литтераттурă.

Пролеттариллĕ литтераттурă пуршуйсен итеолокийĕпе кĕрешес çĕрте, кивĕ тĕнђерен йулнă йăласене пĕтерес ĕçре, çĕнĕ пурнăçăн никĕсне çирĕплетсе пырас ĕçре—ђул çурт тунă çĕрте ђемĕнт мĕнле кирлĕ, çавăн пекех питĕ кирлĕ вырăн йышăнса тăрат̆. Литтераттурă пит кирлĕ вырăнта тăрат̆ пулсан, ун çине пирĕн ытларах çавăрăнса пăхмалли паллах. Ку таранђђен епĕр литтераттурăна вăйлатас, ăна тĕрĕс çулпа илсе пырас ĕç çине сахал пăхнă. Литтераттурăра парттин çивĕђ куçĕ кирлĕ.

## Квалификкатсишĕн.

Литтераттурă ĕçĕ çăмăл ĕç мар. Пирĕн хаљ: сăвă, поемă, калав çырасси мĕн вăл, тесе шутлакансем нумайлана пуçларĕç. Хăшĕ-пĕри пит хăвăрт, сухал шăтиђђенех паллăран паллă писсаттĕлсем пуласшăн çунаççĕ пулас. К у н а ш к а л шухăшлани литтераттурă ĕçĕнђе пуринђен сийенлĕ йапала вара. Вăл йăнăшсене тӳрлетсе пыма памаст̆. Ун пек поет вĕренме те тăрăшмаст̆. Çавăнпа вара ун нимĕн те тухаймаст̆.

Пирĕн шутпа, çамрăк поетсен, писсаттĕлсен вĕренес ĕç çине ытларах уртăнмалла. Хăйсене поет тесе шутлакансенђен ђылайĕшĕн ђăвашла тĕрĕс çырма та вĕренмеллеха. Сăвăсене пур йенђен те лайăхрах йакатма

вĕренес пулать. „Сунталăн“ 12 №-ђе çапăннă „Сехет çитрĕ“ йатлă сăвăра Çенин Петри çапла çырать:

„Сан йулташу йăвăр ĕçре,
Пулăш ăна ђăнлăх ĕçпе;
Йусас пурнăç тĕп никĕсне
Хур тÿсĕмлĕ ђул кирпĕђпе“тет.

Мĕнле ђул кирпĕђши вăл? Кирпĕђе ђултан тунине илтменђђĕ епĕр. Кирпĕђе хĕрлĕ тăмпа хăйăртан тăваççĕ пирĕн йенђе. Çенин Петри сăввинђех нимĕнле тĕп шухăш та курăнмасть. „Тĕн сĕрĕмĕ“ те, „пурнăç тĕп никĕсĕ“ те, „тул çутăлни“ те, „хĕртнĕ тимĕр“ те, „ђик так“ та—тем те пур унта. Ман шутпа, вăл пĕр-пĕринпе çыхăнман сăмахсен пуххи анђах. Тулккине тупас çук вăл сăвăра.

Ун пек „поетсем“ сахал мар. Акă „Сунталăн“ çав №-ђех çĕр те пилĕк (105) поета—сăввусем шурнала кĕрейменççĕ, тесе ответ параççĕ. Ответ илеймен поетсем, тÿрех карçинккана кайаканнисем мĕнђулши? Тата „Çамрăк хресђене“ çыракан поетсем мĕнђул? Пурне те пĕрле илсе шутласан, пилĕк çĕртен те иртеççĕ пулĕ вĕсем. Майакковски калашле, тепĕр вунă çултан, ђăнах та, пурте поета тухса кайĕç. Пурте харкам хăй вађђи „кĕсле“ тупĕç те йурласа çеç пурăнĕç. Шухăша илемлĕ литтературă калăпне кÿртесси йăвăр ĕç. Çакна пирĕн кашни çырма пултараканах ăнлантарас пулать. Квалификкатсишĕн кĕрешесси—ђи кирлĕ ĕç пулмалла.

### Поеçи йе теçĕссемпе лосăнксемши?

Иртнĕ çулла епĕ пĕр ђăваш литтераттурипе интересленекен партрапотнике „Сунтал“ çинђен пĕр сăвă вуласа кăтартрăм. Вуласа пĕтерсен:—Мĕнле, кăмăла кайрĕи!—тесе ыйтатăп. Вăл вăрăммăн сывласа илђĕ те:

— Есĕр ман „Канаш“ çинђе çапăнакан статйасене илĕр те, напоршђĕксене сăвă пек пуçтарма хушăр, вара „Сунтала“ кӳртĕр, ку сăвăран нађар тухмĕ,—терĕ вăл кулса.

Кулас килмен çĕртенех хырăма тытса кулан хăш-хăш сăвă тенисене вуласан. Акă „Канаш“ хаçатра Ленина асăннă кунсенђе çапăннă С. Шăпђакăн „Виçĕ çул“ йатлă сăввине илсе пăхар. Унта вăл çапла çырать:

„Хуçайствă хăпарса, вăйланса пырать.
Промышлĕннăç ӳсет, вăй илет.
Електрис çутти çĕнĕ вăй парать.
Йалсене те текех трактăр кĕрет.
Ватти-вĕттипех шкула çӳреççĕ—
Хутла пĕлменлĕх кунтан кун пĕтет.
Виç пусăллă уйсем те вилеççĕ,
Йал пурнăçĕ йăлтах çĕнелет.

Вулакан, тархасшăн çак „сăвăра“ поеçи тупса парсамђђĕ мана?! Ес тупаймастăп тетĕни? Килĕшетĕп санпа, епĕ те тупаймарăм. Кунашкал сăвă çырмашкăн, ман шутпа, хуть напоршђĕксенђен пăртак намăсланмалла. Мĕн-ма вĕсене пустуй ĕçлеттерес! Ак, çакăн йышши токлат тумалли теçĕссене çырса илсе, вулакана сăвă тесе тыттарма тăрăшакан поетсемпе кĕрешмелле ĕнтĕ. Вулакана та хисеплес пулать вĕт!

С. Шăпђакăн сăвви теçĕс тесен те ђăвашла тĕрĕс çырнăскер марха вăл. С. Шăпђак йулташ:

„Йалсене те текех трактăр кĕрет“ тет. Ђăваш апла калаçнине Самара çитсе те илтмен вара епĕр.

Йалсене те текех трактăр кĕреймĕ тесе çырнă пулсассăн, „текех“ сăмах хăй вырăнĕнђе пулĕђђĕ. Епĕ йал сене трактăр кӳртмелле мар тесе каласшăн мар. „Çырлахтăр тура!“ „Йалсене те текех трактăр кĕрет“ тени

ђăвашла мар вара вăл, унашкал, тен, пулхăрсем анђах калаçнă пулĕ.

## Ђĕререн, йе пўрнерен.

Поеçире ђĕререн çырнă происветени хаклă тăрат̆. Йурăшăн çеç йурлани пустуй ĕç. Ђăваш поеђĕсенђен хăшĕ-пĕрин—вĕсем революутси çулăмĕнђе пиçсе тухман пирки, йе революутсийе ђĕререн йышăнман пирки револутси çинђен çырнă сăвăсем шĕвĕ тухаççĕ. Ун пек поетсен сăвви те вара, ђĕрере вĕресе тухман пирки, ниме йурăхсăр пулат̆, йе суйа тухат̆. Паçăр асăннă Шăпђăкăн „Виç çулнех“ илер:

Партти сехетрен сехете ўсет,<br>
Çирĕп ђултан вăл никĕсне хыват̆“

тет вăл унта. Партти хăй никĕсне, Шăпђăк шухăшĕпе, Ленин вилнĕ хыççăн тин хывма пуçланă мĕнха. Епĕр, **ухмахсем,** парттин никĕсне Ленин хунă тесе вĕренеттпĕр çамрăксене. Суйасса суй та виçине пĕл, теççĕ вырăссем. Çавнашкал „сăвăсен“ ним усси те çук ĕнтĕ. Шăпђăкăн сăвви малтанхи саспаллинђен пуçласа йулашки пăнђа çитиђђенех пўрнерен ĕмсе кăларнă йапала.

## Савни тăнран йарат̆.

Ђăваш поеђĕсен пуçне йулашки вăхăтра савнă хĕрсем çавăра пуçларĕç пулас, тĕрĕссипе савни хăй çеç мар, унăн йапалисем те. Лашман „Савни йенђĕкĕ“ сырђĕ; Митта Ваççлейĕ—„Савни парни“, Рсай—„Кайар, савни, кайар“.

Кусене хирĕç Песименски тахçанах:

„Кама хĕр тути,<br>
Мана сават трупи“—

тесе çырнă. Епĕр те çавнах калатпăр.

Митта Васлейĕ „Савни парнине“ Октăпĕр прасңĕкĕпе сыхма тăрăшнă та, анђах ĕненмелле тухман. Савни сара кивĕ йал савнийех тухнă. Савнин парнийĕ йалав та кивĕ савнирен сĕнĕ савни тăвайман. Октăпĕр револютсийĕн вуннăмĕш сулĕнђе те савни улшăннийех курăнмасť. Савни хĕр сес мар, „Савни парнинђе“ ак савни арсын ађа та улшăнни палăрсах каймасť. Ăна: „Йуратап, улахăм. Сана ђĕререн!.. тени пит те аван кăтартаť вара. Комсомол ахалех улаха сĕнетесшĕн тапаланаť иккен. Вăл (улах) сĕнетмесĕрех пит аван мĕн.

Анђах Митта Васлейĕн поеминђе лайăх вырăнсем те пур:

„Йал хушши Мускавăн выљанаť шавпа,
Ђăнђăнах сапассĕ сĕнелнĕ туйа!
Ку туй пит илемлĕ. Сăраллă тавпа
Кунта кăтартмассĕ ÿтленнĕ вăйа!
Сисĕмпе сĕнелнĕ сак ыр йăласем
Нумайах пулмасť вĕт сĕр сине анни;
Урам тулли халăх, хăмас йалавсем,—
Савăнаť халавлăн ман ђĕре ани!“

Кунта йалта Октăпĕр уйавне урама йалавсемпе тухса уйавланнине аван кăтартнă. Анђах пире тĕл-тĕл лайăх вырăнсем пурри сес мар, пĕтĕм поеми лайăх пулни кирлĕ.

**Кулак шухăшĕ сăвăра.**

„Сунталăн“ 12 №-ђе Йехрим Иванĕн „Тăвăла“ йатлă сăвви сапăнса тухнă. Вăл сăвăра Йехрим Иванĕ револютсине Совет Сойусĕнђен Паришпа Лонтăна хăвалаť.

„Мĕншĕн ху ирсĕрпе
Ес пире тулатăн!“—

тесе сухăраť Йехрим Иванĕ револютсирен тарăхса. Револютси уншăн ирсĕр йапала. Револютси ђистийех тертлентерсе ситернĕ „мĕскĕне!“ Йехрим Иванне питех

револђутсин налука тоххот тăрăх илекен йĕрки канăç памасť пулмалла. Тинкерсе вуласан, Йехрим Иванĕ сăвинђе кулак шухăшĕ лайăх палăраť. Паришпа Лонтăна кайса тустар тени кулакăн шухăшне витĕр курнакан çĕтĕк ашăкпа витни анђах вăл.

„Литтераттурă шкулĕн“ пуç пулса тăракан Савнă Тусăн Йехрим Иванĕн „Тăвăлне“ ырлама ăçтан хăват çитнĕши!?..

## „Йăвăр условисем çинђен“.

Пĕр поет хăйне ман пата сырнă çырăвĕнђе çапла çыраť: „Темшĕн есĕр хутошнĕк умне калама çук йăвăр условисем лартатăр“,—тет. Çăмăл теместпĕр. „Вунсаккăртах паллă писаттĕлсем пулма ĕмĕтленекенсене“ ђăнах кăмăла каймĕç епĕр лартакан условисем. Епĕр вĕренес пулаť, квалификкатсишĕн кĕрешес пулаť,—тетпĕр. Происветени технĕккă йенђен те, ăшђикĕ йенђен те тĕплĕ тунă йапала пулмалла. Халђ пирĕн поетсен сăввисенђе пĕр-пĕринпе çыхăнман сăмахсем, йĕркесем тем ђухлех. Тата епĕр, формăшăн та кĕрешес пулаť, тетпĕр.

Револђутси йуррине туй кĕвви мĕнле килĕшмест, çавăн пекех револђутсиллĕ сăвă валђи те Иванов „Нарспийе“ çырнă формă килĕшме пултараймасť. Кивĕ формăран пирĕн хамăра кирлине анђах суйласа, аласа илмелле. Револђутсиллĕ сăвă валђи револђутсиллĕ формă кирлĕ.

Епĕр йăвăр условисемшĕн! Çăмăл тупăнакан йапалан перекеђĕ çук. Çăмăл пулакан йапалан хакĕ йўнĕ!

## „Илемлĕ пурнăçăн мĕлкисем“ пурши?

Çав çырурах тата поет пирĕн сăмахпа:—ђăваш йалĕнђи çĕнĕ пурнăçăн калђисене курма вĕренмелле, ăна литтераттурăра кăтартма пĕлмелле, тенипе килĕшмесĕр çакăн пек ыйту лартаť: „Илемлĕ пурнăçăн мĕлкисем те пулин пури пирĕн ђăваш пурнăçĕнђе?“ тет.

Мĕнле илемлĕ пурнăç кирлĕ сана?—тесе ыйтас килет манăн çыру автăрĕнђен.

Ђăнах та, сотсиалисăма тăватпăр çеçха епĕр. Анђах пирĕн тепĕр тĕрлĕ илемлĕ пурнăç пур, вăл—пулас илемлĕ пурнăçшăн—сотсиалисăмшăн кĕрешни, ăна тăвас тĕлĕшпе ĕçлени. Лайăх копператтившăн, лайăх вуламалли çуртшăн, машшин йулташлăхшĕн, лайăх колхосшăн, нумай пусăллă уйшăн кĕрешни—пирĕншĕн илемлĕ пурнăç.

Ку мĕлке çеç мар, йулташăм! Кулленех пĕђĕк утăмпа, майĕпе пулин те малаллах шăвакан сотсиалисăм тăвас ĕç—мĕлке мар, пурне те курăнакан пурнăçлă ĕç.

Ђăн, йулташăм, „револђутси" тенĕ сăмахран çеç çăмах пĕçерсе çийес çук" çав. Çавăнпа ĕнтĕ епĕр револђутси ђăваш ĕçхалăхĕн пурнăçĕнђе тунă улшăнусене курма вĕрентесшĕн поетсене. Çавăнпа епĕр:

„Хуçайствă хăпарса, вăйланса пыраť,

Промышлĕннăç ўсет, вăй илет,

текенсене пĕтĕм халран хирĕç тăратпăр. Мĕншĕн тесен ун пек хаçатсем çинђе те çыраççĕ, ун пек çеç мар, лайăхрах çыраççĕ.

Сăвă—пролеттарисем пĕрлешĕр, темесĕрех хăйĕн ăшђикĕпе, хăйĕн револђутсиллĕ сĕткенлĕхĕпе пролеттарисене пĕрлешме пулăштăр, пролеттарисене çеç мар, сапаланђăк хресђенсене те пролеттарисемпе пĕрлешме пулăшмалла вăл. Çак кайранхи ђăваш поеçишĕн кирлĕрен те кирлĕ йапала вара.

„Йурланă çĕрте пурнăçран нийепле те иртсе кайма çук" тет çав йулташах. Кунта тĕрĕсси пур ĕнтĕ. Ђăнах та, мĕнле пăрăнса иртсе каймаллаха çав йалта револђутси хыççăн йешерме пуçланă калђасенђен! Нийепле те иртсе кайма май çук. Хура куçлăх тăхăнсан анђах курмасăр иртĕн.

## Çамрăк писсаттĕлсемпе комсомол.

Пăртак кăмăл хуçăлни, киђемлĕ шухăшсем тухкалани пирĕн ђăваш писсаттĕлĕсем хушшинђе иртнĕ çуркунне кăштах сисĕннĕђђĕ. Вăл тĕрлĕ условисенђен килнĕ. Йулашки вăхăтра писсаттĕлсен хăйсен тĕп ĕçĕпе интересленни ытларах палăра пуçланă. Вĕсен ĕçлес кăмăлĕ те, çапăнакан происветенисем тăрăх, майĕпе çĕкленсе пынăн туйăнаŧ пире. Çапах та, кунта ытти ĕç хушшинђен васкаса ĕçлени, хăшĕ-пĕри происветенисене лайăх йакатасшăн тăрăшманни лайăхах палăраŧха. Анђах пирĕн тĕп шухăш ун çинђен мар.

Епĕр çамрăк писсаттĕлсем çинђен, вĕсен пурнăçĕ, вĕсен литтераттурăллă ĕçĕ çинђен çырасшăн. Çамрăк писсаттĕлсен пултарулăхĕ çинђен пирĕн хаçатсем те, „Сунтал“ шурнал та ђылай çыркаларĕç. Ку тĕлĕшпе „туман ŧыха пилĕкне хуçаканни“ те пулкаларĕ пулас та, анђах ун çинђен çырасси те ку стаŧйан темине (тĕп шухăшне) кĕмест.

Ман умра „Çамрăк Хресђен“ 1(54) №-рĕ выртаŧ. Хаçатăн „Çамрăксен пурнăçĕ“ тенĕ пайра: „Уђйанăвскăри Ђăваш Петтехнĕккăмĕ çумĕнђи ПСÇЛКС йађейкки хăйĕн ђленĕсене: Митта Ваçлейне... ирсĕр ĕçсем туса çӳренĕшĕн кăларса ывăтрĕ“ тесе пĕлтереççĕ.

— Ну, вара мĕн каласшăн есĕ? Комсомол йатне хисепрен кăларакан ĕçсем тунă та комсомолран кăларнă, мĕн пур вара унта?—тейĕ вулакан малтанах çак йĕркесене вуласа пăхсан.

Ђăнах та, вăл ĕç çинђен уйрăм ђарăнса тăмаллийех

те çукђĕ—Митта Ваçлейĕ комсомол ретĕнђен тухакан, майĕпе вĕренсе ураланса пыракан çамрăк писсаттĕл пулман пулсассăн. Анђах Митта Ваçлейĕ—комсомол ретĕнђен шăтса тухакан çамрăк писсаттĕл. Çавăнпа ăна комсомолран кăларса пăрахни çинђен кăшт та пулин шухăшласа пăхмаллах.

Мĕне пĕлтеретха вăл—Митта Ваçлейне комсомолран кăлармалла пулни? Вăл, пĕр йенђен, Митта Ваçлейĕ хăй комсомолран сивĕннине, тепĕр йенђен—комсомол ăна политтĕк тĕлĕшĕнђен вĕрентсе çитĕнтерме пултарайманнине пĕлтерет.

Митта Ваçлейĕ пекки пĕрре çеç мар, ку тĕлĕшпе тата ыттисене те кăтартма пултаратпăр.

Акă Хусанкайах илер. Хусанкай комсомолĕсђĕ (тен хаљ те комсомолĕс пуљ, тĕплĕ пĕлместĕп), анђах ăна комсомолĕс теме нийепле май та çукђĕ. Мĕншĕн? Мĕншĕн тесен вăл йађейккă пухăвĕсене сайра, ăнсăртран пырса лекнĕ пек анђах çӳретђĕ. Тата хăйне те пур çĕрте те комсомолĕс пек тыткаламастђĕ. Хусанкай комсомолра тăрса комсомолĕс пулманни мĕнрен килнĕ? Комсомол ун çине çавăрăнса пăхманнинђен. Йађейккă ăна хăйĕн ĕçне хутшăнтарма тăрăшманнинђен, ĕç паманнинђен, пухусене çӳремесен те мĕншĕн пыманнине ыйтманнинђен килнĕ.

Çавăнпа вара Хусанкай комсомолран, сотсиалисăм тăвас тĕлĕшпе хĕрӳллĕ ĕçлекен орканисатсинђен майĕпе уйăрăлса пырса Йеççенин ытамне пырса лекет:

„Кирек мĕн кала, йулташăм, кирек мĕн кала!
Ухмаха йеретĕп пулĕ Йеççенинпала“

тесе çухăрат вăл хăйĕн „Алентейе“ йатлă çапăнман сăввинђе. Куна çеç мар, тата тĕттĕмрех сăвăсем те кăтартма пулат Хусанкайăнне, анђах хаљ ал айĕнђе ун сăввисем çук пирки ку та çитĕ.

Иккĕ сахал пек туйăнсан, виççĕмĕшне те илер. Виççĕмĕш вăл—хăйĕн сăввисенђе, пуринђен ытларах, пĕђђен вĕлтĕртетекен çамрăк поет Рсай. Рсай та комсомолĕс пулнă. Совпартшкулта та вĕреннĕ. Анђах... (пĕтерет çав „анђах") хаљ вăл комсомолĕс мар. Комсомолран вăл çав Митта Ваçлейĕ пекех тухса ўкнĕ.

Рсай йулташăн иртнĕ çулла, кĕркунне çырнă сăввисенђе пеççимисăм, киђемлĕх туллийехђĕ, хăшне-пĕрне вилĕ тăпри шăрши çапса кайнăђђĕ. Хаљ Рсай сăнсăпаđĕ урăхланса пынă пек туйăнаť (ретакси çывăхĕнђе пыни пăртак килĕшрĕ пулмалла, атту ађан шанђăкĕ ђистийех çухалнăђђĕ). Çапах та „урăхланнă" Рсай ђĕреренех урăхланни лайăх палăрмасť. Çапах та, Ваçанкка калашле, Рсай уйăх çине ђас та ђас хăпарма йуратаť; вăрмансем урлă мулкађсемпе тавлашса ђупма йуратарах параť. Совет çĕршывĕнђе сотсиалисăмлă хуçалăхпа уйрăм кăпиталислă хуçалăхсем тавлашса ђупнине сăнама вĕрентес килет пирĕн Рсайсене. Йала çĕнетекен вак-тĕвек ĕççене, ĕмĕртен ађа-пăђаран пуçласа ватти таранђђен çăпата туса тĕттĕмре, пĕр хĕлхем çутă курмасăр пурăннă Çитмĕш йалĕсем çĕнĕлле пурăнма пуçланине кураймасťха Рсай. Пире пролеттариллĕ литтераттурăна çавă кирлĕ. Рсайăн „епĕ" ытла çийелте палăрса тăраť. Куна сăмах майĕ килнипе каласа хăварас терĕмĕр.

Çапла, çамрăк писсаттĕлсенђен те хăшĕ-пĕри хавшакланса пыни, çырма вĕренме пуçласанах тĕрĕс çул çинђен пăрăнса пыни курăнаť. Малта асăннă поетсем пурте комсомол ĕретĕнђе ўссе, литтераттурă ĕçне ĕçлеме пуçласанах комсомолран сивĕнсе пынă. Ку сийенли паллах ĕнтĕ. Çавăнпа çак ĕç çинђен тĕплĕ шухăшласа, вăл сийенлĕхе пĕтермелли майсем тупмалла. Çăвăн пекех, Митта Ваçлейĕ çинђен те ăна комсомолран кăларнă

хыççăн манса каймалла мар. Йађейккăн ăна йусама тăрăшмалла. Митта Васлейĕсем, Хусанкайсем комсомолшăн çухалнă çынсем пулмалла мар. Комсомолшăн вĕсем пĕтнĕ пулас пулсан, литтераттурăшăн та вĕсем нумайах усăллă çынсем пулас çук.

Çамрăк писсаттĕлсем çине ытларах çавăрăнса пăхни кирлĕ. Çамрăк писсаттĕлсене комсомолран сивĕнме парас пулмасť. Комсомолра тăракан çамрăк писсаттĕлсене йађейккă патнерех çывхартмалла. Çамрăк писсаттĕл комсомолран уйăрăлмалла мар, комсомолăн кулленхи ĕçне хутшăнса ĕçлесе пымалла, комсомол масси сывлакан сывлăшпа сывламалла, ун хаваслăхĕпе хаваслanмалла, ун ĕç хастарлăхĕпе хастарланмалла; çапла пулсан анђах епĕр хамăр çамрăк писсаттĕлсенђен ĕçхалăх çамрăкĕсене кирлĕ происветенисем кĕтме пултаратпăр.

Çамрăк писсаттĕлсене пурнăç çине хура куçлăх витĕр пăхасран, вĕсен хăйсен кулленхи ĕçне, пурнăçне ĕç çамрăкĕсен, ђи малтан комсомол масси ĕçĕпе, пурнăçĕпе çыхăнтарни анђах çăлма пултарať.

Ђăваш комсомолĕн çамрăк писсаттĕлсене хăйĕн ретĕнђе политтĕке вĕрентсе çитĕнтерес ĕçе вăйлатмалла.

Ђăваш Пролеттари Писсаттĕлĕсен Сойусĕн те хăйĕн ретĕнђе тăракан çамрăк писсаттĕлсене (тăманнисене те куç умĕнђен йамалла мар) пултарулăхне сăнаса криттĕклес ĕçе лайăхлатмалла. Пире çамрăк писсаттĕлсене тĕрĕс çул çине тухма пулăшакан криттĕк кирлĕ.

Çамрăк писсаттĕлсем хушшинђе палăракан пессимисăмпа, пурнăçа йуратманнипе—ЂППС-ĕн комсомолпа пĕрле мĕн вăй çитнĕ таран кĕрешес пулať.

# ТУПМАЛЛИ.


*Стр.*

АЛЕНТЕЙ. Пирӗн литтературӑри йут шухӑшсем (умсӑмах вырӑнне) . . . . . . . . . . . . . . 3

Маркҫисӑм-ленинисӑмпа литтературӑ . . . . . 9

Илемлӗ происветенипе хаҫатри статйа ӑрасналӑхӗ . . . . —

Формӑпа сотершани . . . . . . . . . . . . . . . 10

Илемлӗ происветени сотершанийӗ . . . . . . . . 12

Искуствӑпа опъӗствӑ пурнӑҫӗ . . . . . . . . . . 13

Илемлӗ происветенире итейӑ пури? . . . . . . . . . 16

Мӗн вӗл итеолоки? . . . . . . . . . . . . . . . 18

Опрӑс, фапулӑ, сотершани . . . . . . . . . . . 20

Пире „тентентсиллӗ литтературӑ“ кирлӗ тенине мӗнле ӑнланмалла? . . . . . . . . . . . . . . . . . . 21

Маркҫисӑмла криттӗккӑн сатаъӗсем . . . . . . . 23

Ъӑваш пролеттариллӗ литтературӗн никӗсӗ ҫинъен . . . 27

„Утӑм“ утти . . . . . . . . . . . . . . . . . . 28

Поетсемпе поеҫи ҫинъен . . . . . . . . . . . . 39

Квалификкатсишӗн . . . . . . . . . . . . . . . 40

Поеҫи йе теҫӗссемпе лосӑнксемшӗн . . . . . . . 41

Ъӗререн йе пӳрнерен . . . . . . . . . . . . . . 43

Савни тӑнран йарат . . . . . . . . . . . . . . —

Кулак шухӑшӗ сӑвӑра . . . . . . . . . . . . . 44

Йӑвӑр условисем ҫинъен . . . . . . . . . . . . 45

„Илемлӗ пурнӑҫӑн мӗлкисем“ пурши? . . . . . . . —

Ҫамрӑк писсаттӗлсемпе комсомол . . . . . . . 47

Цена 25 коп.

Д. Исаев. ЗА ПРОЛЕТАРСКУЮ ЛИТЕРАТУРУ.

Чувашское Государственное Издательство 1930